24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
17
ЭРНЕКУН
14 (5729) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ

Совет ялĕн политикăллă, культурăллă пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Пĕчченшерĕн ĕçлесе пурăннă хресченсен пит те вакă тата çав тери чухăн хуçалăхĕсем вырăнне никам çĕнтерейми хăватлă строй — колхозлă строй ÿссе çирĕпленчĕ.

Ленин — Сталин партийĕ пулăшнипе хресченсем колхоз çулĕ çине тăрса хăйсен пĕтĕм раскалне хăйсен аллине илчĕç. Халĕ пирĕн совет хресченĕсем эксплоатаци пусмăрне чăтса асапланмаççĕ, вĕсем капиталистсемпе помещиксемсĕр, кулаксемпе спекулянтсемсĕр пурăнаççĕ, тÿрĕ кăмăлпа, коллективпа пĕрле ĕçлесе хăйсен материаллă тата культурăллă пурнăçне кунсеренех лайăхлатса пыраççĕ.

Колхозсене пĕрлетнĕ хресченсем ялхуçалăх производствин малта пыракан техникипе усă курса тата агрономи наукин çĕнĕ çитĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртсе пырса социализмлă ялхуçалăхĕнче чаплă çĕнтерÿсем тăваççĕ. Кам та пулсан, ĕлĕк пĕр пучах ÿснĕ вырăнта икĕ пучах, пĕр тĕп ÿснĕ çĕрте икĕ тĕп курăк ÿстерме пултарать пулсан, çавă пĕтĕм этемлĕхрен тав илме тивĕçлĕ пулнă пулĕçĕ, — тенĕ вырăссен аслă дарвинисчĕ Тимирязев. Вăл кăна мар, малта пыракан ытти ученăйсем те ĕмĕтленнĕ ун çинчен. Анчах капиталистсемпе помещиксем пуçпулса тăнă чухне хуть те кирек мĕнле пархатарлă ĕмĕт те пурнăçа кĕреймен.

Колхозлă строй çĕнтернĕ хыççăн, çĕрĕçне наука никĕçĕ çинче туса пыма тытăннă хыççăн кăна, Тимирязев калашле, ĕлĕк пĕр пучах çеç ÿсме пултарнă вырăнта икшер пучах ÿстерме пуçларĕç пирĕн колхозниксем. Çак çулсем хушшинче социализмлă ялхуçалăхĕн продукцийĕ тата çĕрĕçĕн тухăçлăхĕ, обществаллă вылăх-чĕрлĕхĕн продуктивлăхĕ темиçе хут ÿсрĕ.

Пĕччен, асаттесен кивĕ меслечĕпе тата кивĕ ĕçхатĕрĕсемпе ĕçлесе пурăннă чухне кашни хресчен хăйĕн хуçалăхĕшĕн хăй тăрăшнă. Хăй пĕччен сухаласа акнă вăл, хăех вырса пуçтарса кĕртнĕ, ăна никам та пулăшман, унăн кунçулĕпе пурнăçĕ çинчен тăрăшакан та пулман. Колхозлă строй çĕнтерни ялхуçалăхне ертсе пыракан тĕпренех çĕнетсе улăштарчĕ. Хуçалăха тытса пырас ĕçри ответлăх халĕ уйрăм хресченсем çинчен колхоз руководстви çине, колхоза ертсе пыракан чăмăр çине куçнă. Халĕ ĕнтĕ хресченсем хуçалăхшăн тăрăшассине тата ĕçе пĕлсе тытса пырассине хăйсенчен мар, колхоз руководствинчен ыйтаççĕ, е, тĕрĕсрех каласан, хăйсенчен ыйтнинчен ытларах колхоз руководствинчен ыйтаççĕ, — тет Сталин юлташ.

Пирĕн парти тата правительство тăрăшнипе коллективлă хуçалăха большевикла ертсе пыракан кадрсем, колхозлă производствăн чаплă организаторĕсем пиншерĕн ÿссе çитĕнчĕç. Вĕсем парторганизацисемпе алла-аллăн тытăнса ĕçлесе пыраççĕ, хăйсем тавра актива пĕтĕçтереççĕ, ялхуçалăх артелĕн сталинла уставне пурнăçа кĕртессишĕн, артелĕн производствăллă вăйĕсене тата обществаллă хуçалăхне тĕреклетессишĕн кĕрешеççĕ, çак ыйтусем тавра колхозниксен анлă массисене мобилизацилеççĕ.

Вăрнар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз председательне Ф. Михеев юлташах илер-ха. Вăл производствăн чăн-чăн хастарлă командирĕ, хуçалăхра çирĕп йĕрке тытакан, кирек мĕнле ĕçе те хăвăрт чухласа илсе пурнăçа кĕртсе пыракан руководитель, пысăк пултаруллă тата пуçаруллă организатор.

Михеев юлташ мĕнпур колхозниксене производствăра тÿрĕ кăмăлпа тухăçлăн ĕçлеме хăнăхтарнă, вĕрентнĕ, вĕсене вăйлă тырпул туса илессишĕн, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн тата артелĕн обществаллă хуçалăхне ÿстерсе тĕреклетессишĕн мобилизацилет. Çавăнпа та ĕнтĕ Михеев юлташ ертсе пыракан колхоз экономика тĕлĕшĕнчен хăватлă та пысăк тупăш паракан хуçалăх пулса тăчĕ. Колхоз государство умĕнчи пур обязательствăсене те пĕрмаях срокчен тултарса пырать. Кунти колхозниксем кăçал гектартан 150 пăтран кая мар тĕштырă туса илме сăмах пачĕç. Халĕ çак ĕмĕте пурнăçа кĕртессишĕн колхозниксем чăннипех большевикла ĕçлеççĕ.

Пысăк та шултра хуçалăха — колхоз производствине ертсе пырас ĕçĕн искусствине вĕренсе алла илнĕ председательсем сахал мар, вĕсен йышĕ питĕ пысăк. Вĕсем Ленин — Сталин парти ĕçне, колхозлă стройăн ĕçне пĕтĕм чĕререн юратса тăваççĕ, колхозниксен шанăçне тÿрре кăларассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ.

Çавăншăн вĕсене колхозниксем юратаççĕ, хисеплеççĕ.

Çак кадрсемшĕн тăрăшасси, вĕсен ĕç квалификацине ÿстерме, политикăллă пĕлÿлĕхне тата тавракурăмне хăпартма пулăшасси—парти тата совет организацийĕсен, çĕрĕç органĕсен ĕçĕнче пит те пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Анчах фактсем акă мĕн çинчен каласçĕ: хăшпĕр çĕртре колхоз председателĕсемшĕн большевикла тăрăшмаççĕ, вĕсем çине чунсăррăн пăхнине те тĕл пулма пулать. Сăмахран, Октябрьский районра иртнĕ çулта утмăл председатель улшăннă. Вăл çеç те мар, хăшпĕр колхозсенче председательсем умăлăн-хыçлăн улшăнса тăраççĕ. «Венера» колхоз руководствинче иртнĕ çулта 4 çын пулса пăхнă. Юлашки председатель А. Лионский 2—3 уйăх ĕçленĕ те хăй ирĕкĕпех ĕçлеме пăрахнă.

Председательсене час-часах улăштарни колхоз производствине дезорганизацилет, ĕç дисциплинине янăхтарать тата хуçалăха юхăнтарни патне те илсе пыма пултарать. Çакна ăнланса илме вăхăт ĕнтĕ. Колхоз председателĕн прависене хĕсмелле мар, вĕсене пурнăçа кĕртсе пыма пулăшмалла, вĕсен авторитетне çĕклемелле.

Партипе правительство колхоз руководителĕсене пысăк ĕç шанса панă. Кама нумай панă, унтан нумай ыйтаççĕ. Колхоз председателĕ артелĕн мĕнпур ĕçĕшĕн, производствăллă планĕсене тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарассишĕн, обществаллă пурлăхпа тĕрĕс усă курассишĕн государство умĕнче ответлă пулса тăрать. Унăн колхозниксен анлă массипе тачă çыхăну тытса ĕçлемелле, массăна ĕçлеме вĕрентмелле, çав вăхăтрах массăран та вĕренмелле. Колхоз руководителĕ массăран уйрăлса каять пулсан, вăл бюрократ тумĕпе витĕнсе ларать пулсан, паллах, ун пек руководитель пĕтсе ларать, вăл колхозниксен шанăçне тивĕçлĕ çын мар.

Çавăн пиркиех ĕнтĕ «Заря» колхоз председателĕ Рябчиков (Йĕпреç р.) артель ĕçне юхăнтарма пуçланă. Колхозра ĕç дисциплини çирĕп мар, çĕрулми, вылăх кăшманĕ нумай çĕрсе пĕтнĕ, пĕр гектар çинчи махоркăна уйхиртен пуçтарса кĕртмесĕр хăварнă. Колхоз çуракине хатĕрленме тытăнманпа пĕрех. Рябчиков ĕç дисциплинине дезорганизацилекенсене хирĕç, кахалсене, ĕçе çиелтен кăна тăвакансене хирĕç кĕрешмест, вăл вĕсене хÿтлесе пурăнать. «Бригадирсем! Юлашки хут асăрхаттаратăп тата ытти мерăсем йышăнатăп», тесе распоряженисем çырни колхоза ертсе пынине пĕлтермест, тÿррипе каласан, вăл хуçалăха сиен кăна кÿрет.

Колхоз председателĕ пуçаруллă çын пулмалла, унăн организаторла опычĕ те пысăк пулмалла. Апла пулсан, колхоз руководителĕн хăй ертсе пыракан хуçалăха, унăн çыннисене лайах пĕлмелле. Колхоз хуçалăхне тытса пырасси хăй тĕллĕн, самотек йĕркипе пулса пымасть. Хуçалăха планласа, организацилесе пымалла, хуçалăхăн производствăллă вăйĕсене, пурнăçне, мĕнпур вак-тĕвек ĕçĕсене те тĕплĕн пĕлни кирлĕ. Колхоз председателĕн пур ĕçе те хутшăнмалла, пур ĕç çине те тинкерсе пăхмалла, хуçалăхри нимĕнле участока та асăрхамасăр хăвармалла мар. Пĕр сăмахпа каласан, колхоз руководителĕсен чăн-чăн специалистсем, ĕçĕн хуçисем пулас пулать.

Паллах, ку çăмăл ĕç мар, анчах ăна пурте çĕнтерсе илме пултараççĕ. Тăрăшни кăна кирлĕ, тăрăшсан пурне те тума пулать. Ялхуçалăхне пĕрмаях механизацилени, агротехникăн çĕнĕ меслечĕсемпе усă курни, колхоз производствине пур енĕпе те аталантарса пыни—колхоз руководителĕсен ответлăхне хăпартать, вĕсенчен ытларах вăй тата пĕлÿ ыйтать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ колхоз председателĕсен çĕрĕçĕн наукине, большевизма, марксизм-ленинизмăн экономикăллă наукисене тимлĕн вĕренмелле. Çак ĕçре вĕсене парти, совет организацийĕсен, çĕрĕç органĕсен пулăшмалла.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ «Колхоз председателĕсене ĕçукçи тÿлесси çинчен» йышăннă постановлени колхоз председателĕсен материальнăй пурнăç условисене темиçе хут лайăхлатать. Çакă вăл колхоза ертсе пыракан кадрсене çирĕплетме пулăшать. Парти, совет организацийĕсен, çĕрĕç органĕсен задачи—çак постановлението пурнăçа кĕртсе пырасси, çавна май колхоз кадрĕсене ялхуçалăх артельне наукăпа техника никĕçĕ çинче малалла илсе пыма пулăшасси пулать.

ВКП(б) XVIII КОНФЕРЕНЦИЙĔ ЯЧĔПЕ ПЫРАКАН СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Ăмăртăва ертсе пыратпăр

Тăрмăшри (Елчĕк р.) территориллĕ пуçламĕш парторганизаци ВКП(б) Пĕтĕм Союзри конференцийĕ ячĕпе сарăлса кайнă ăмăртăва хăй ертсе пырать. Коммунистсен 1941 çулти январĕнче малтанхи кунĕсенче пулнă пухăвĕнче ялсоветне кĕрекен колхозсенче партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăрту мĕнле сарăлса пыни çинчен ялсовет исполком председателĕ Федоров юлташ докладне итлерĕмĕр. Пухура территориллĕ пуçламĕш парторганизаци ертсе пыракан колхозсенче конференци умĕнхи социализмлă ăмăрту вăйлăн сарăлса пыни палăрчĕ.

«Красное знамя» колхоз конференци уçăлнă тĕле 1941 çулти çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитессишĕн, 500 лав торф кăларассишĕн кĕрешет. Ку колхоз «Новый путь» колхозпа ăмăртса ĕçлет. «Новый путь» колхоз та начар мар ĕçлет, вăл вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ пекех, удобрени валли çĕрĕк тăпри кăларать. Халĕ ялхуçалăх машинисене юсаççĕ.

Колхозсем ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва илнĕ обязательствăсене тултарма пĕтĕм колхозниксене мобилизацилес тĕлĕшпе коммунистсем политикăллă агитаци ĕçне вăйлăн туса пыраççĕ.

П. ЩЕРБАКОВ.
Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ.

Парти конференцине тивĕçлĕ парнесем

ЕЛЧĔК. Аслă Пăлатимĕш ялсовечĕ партин XVIII конференцине паллă çитĕнÿсем туняпе кĕтсе илет. Партконференцине мĕнле хатĕрленмелли çинчен ялти интеллигентсен пухăвĕнче тата колхозри стахановецсемпе активистсен канашлăвĕнче сÿтсе-явнă. Ку пухусенче хамăр çине обязательствăсем илтĕмĕр. Хамăр умма лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме хамăр вăя, ял активне участоксем тăрăх тĕрĕс çирĕплетсе тухрăмăр. Ялсоветĕнче пирĕн пурĕ сакăр участок. Кашни участок çумнех комсомолецсене çирĕплетнĕ. Вĕсем халĕ çак участоксенче колхозниксем хушшинче икшер каласу туса ирттернĕ. Вулав çурчĕн заведующийĕ, комсомол комитечĕн секретарĕ Васильев юлташ хăйĕн лайăх ĕçĕпе ыттисене хавхалантарса пырать.

Юлашки вăхăтра ялсоветне кĕрекен Ворошилов ячĕпе тăракан колхозпа «МОПР» колхоз хăйсен ĕçĕсене чылай лайăхлатрĕç. Вĕсем вылăх-чĕрлĕхсене ăшă витесенче, тутă пăхса усраççĕ. Ку колхозсем государство умĕнчи парăмсене вăхăтра тата пĕтĕмпех парса татнă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1556 лав тислĕк, 30 центнер кĕл, 188 тонна çĕрĕк тăпри хатĕрленĕ.

«МОПР» колхоз 950 лав тислĕк, 10 центнер кĕл, 200 лав çĕрĕк тăпри уя кăларнă. Ку тĕлĕшпе ĕç вăйлансах пырать.

Ялсовечĕ ытти енĕпе те начар мар ĕçлет. Иртнĕ çулхи тăваттăмĕш квартал финанс планне 107 процент тултартăмăр. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе кăçал татах та аванрах ĕçлес тетпĕр. Кăçалхи пĕрремĕш кварталти финплана срокчен тултарасси çинчен активистсемпе сÿтсе-яврăмăр. Культсбор укçине срокчен пухса пама тăрăматпăр. Халĕ ку таринчен культсбор укçине 3 пин тенкĕ пухса панă та ĕнтĕ. Партин XVIII конференцийĕ уçăлнă кун тĕлне пĕрремĕш кварталти финанс планне пĕтĕмпех тултаратпăр.

И. Портнов.
Аслă Пăлатимĕш ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Çыхăну работникĕсен обязательстви

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Çак кунсенче çыхăну работникĕсен производствăллă канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта 1940 çулти промфинплана тултарни тата 1941 çулти промфинплан çинчен сÿтсе-яврĕç.

Районри çыхăну конторин 1940 çулти плана 98 процент тултарнă. Уйрăм отделенисем — Супар тата Упи—102 процент тултарнă. Вĕсем хаçат-журналсем сарас енĕпе те лайăх ĕçлеççĕ, пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ.

Супар почта отделенинчи Артемьев, Янгасри «Волга» колхозри И. Ефремов, Чадукасси почта отделенинчи Ионов писмоносецсем хаçат-журнал сарас тата маркăсем сутмалли плансене 110—130 процент тултарчĕç. Вĕсем виççĕмĕш те 55 çултан иртнĕ, лайăх ĕçлесе пынăшăн темиçе хутчен те преми илнĕ.

Çыхăну работникĕсем партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса кăçалхи 1-мĕш кварталти плана февралĕн 15-мĕш тĕлне 75 процент тултарма обязательство илчĕç. Çавăн пекех колхозсенче радиофикаци ĕçне йĕркелесе яма пулчĕç.

П. МАЙОРОВ.

УЙРĂМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КАМПАНИЙĔ

Суйлава хĕрсе хатĕрленеççĕ

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ уйрăм суйлав округĕсем тăрăх СССР Верховный Советне депутатсем тата ЧАССР Верховный Совечĕн Президиумĕ уйрăм суйлав округĕсем тăрăх ĕççыннисем депутачĕсен районсенчи, хуласенчи, ялсенчи тата поселоксенчи Совечĕсене çĕнĕ депутатсем суйламалли суйлав кампанин срокĕ çинчен кăларнă Указсене Чăваш Республикинчи ĕççыннисем хăпăл туса кĕтсе илчĕç.

Январĕн 16-мĕшĕнче Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсен кĕске вăхăтлăх пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта служащисене суйлав кампанийĕ пуçланни çинчен каласа панă. Наркомземри служащисем çитес суйлавсенче те хăйсен сасĕсене коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ тăратнă кадидатсемшĕн пама пуласçĕ. Çакăн пекех вĕсем иртнĕ суйлавсем вăхăтĕнче пулнă суйлав участокĕсенче политикăллă агитаци ĕçне вăйлатма кирлине палăртаççĕ.

ЧАССР Юстици Халăх Комиссариатĕнче, Финанс Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсен, тир-сăран заводĕнчи рабочисемпе служащисен пухăвĕсем иртнĕ. Рабочисемпе служащисем хăйсен пухăвĕсенче уйрăм округсем тăрăх пулакан çитес суйлава татах та пысăкрах активлăхпа, организованнăн пулнине ирттерме пуласçĕ. Суйлав кампанийĕ пуçланнă ятпа пулакан пухусенче йышăннă резолюцисенче вĕсем коммунистсемпе беспартийнăсен сталинла блокĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме пуласçĕ.

* * *

Ĕççыннин депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн Исполкомĕ уйрăм округсем тăрăх пулакан суйлав кампанине хатĕрленнĕ май суйлавçăсен списокĕсене, суйлав участокĕсенчи пурлăхсем мĕнле тăнине тĕрĕслеме тытăннă. Çак ĕçе хулари парти, совет, комсомол, профсоюз активĕ çĕршер çын хутшăннă. Тĕрĕслÿ иртнĕ суйлав участокĕсенче пурăнакансем хушшинче пысăк улшăнусем пулнине кăтартать. Хăшпĕр участоксенче çĕнĕрен 30—40 суйлавçă хутшăннă.

Агитаторсем ялсене тухса кайрĕç

ОКТЯБРЬСКОЕ, январĕн 16-мĕш. (Телефон тăрăх). Уйрăм округсенче суйлав кампанийĕ пуçланнă май, паян ялсене районран 15 агитатор тухса кайрĕ.

Ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен депутачĕсене уйрăм округсем тăрăх 15 ялсоветра суйламалла. Агитаторсем суйлав законĕ, Сталинла Конституци çинчен ăнлантарса пама тытăнаççĕ.

К. ФИЛИППОВ.

Депутатсене удостоверенисем параççĕ

КИШИНЕВ, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Енер табак фабрикин набивочнăй цехĕнче кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче Молдави Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçленĕ округри суйлав комиссин председателĕ Чернея юлташ стахановкăна Наталия Ивановна Брынговяна депутат удостоверенине панă. Удостоверени панă чухне рабочисем те нумай пулнă, вĕсем Наталия Ивановнăна хĕрÿллĕн саламланă.

* * *

ЧЕРНОВИЦЫ, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Паян Союз Советне суйламалли 624-мĕш №-лĕ округри суйлав комиссийĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Комисси членĕсемсĕр пуçне, ларăва фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем, çывăхри ялсенчи хресченсем те пынă.

Комисси председателĕ Черновицы хулинчи вагонсен деповĕнчи мастер-стахановец Н. Коцюбинский юлташ Ласло Антонович Лукана, ăна Союз Советне депутата суйлани çинчен удостоверени панă.

Удостоверени илнĕ чухне Лука юлташ çапла каланă:

— Юлташсем-суйлавçăсем, ман çине шанăç хунăшăн сире тавтăватăп. Хамăн мĕнпур вăй-халăма шеллемесĕр халăх ĕçĕшĕн ĕçлеме пулатăп, пире Ленин вĕрентнĕ пек, аслă Сталин вĕрентнĕ пек ĕçлеме пулатăп.

Паян Национальноçсен Советне суйламалли 638-мĕш №-лĕ округри суйлав комиссийĕн ларăвĕнче Иван Самойлович Грушецкине, ăна Национальноçсен Советне депутата суйлани çинчен удостоверени панă.

Ташкентри пиравăр комбиначĕн иккĕмĕш черечĕ

ТАШКЕНТ. Ташкентри Сталин ячĕпе тăракан пиравăр комбиначĕн строителĕсемпе монтажникĕсем ВКП(б) XVIII конференцийĕ уçăлнă куна хăйсен предприятийĕн иккĕмĕш черетне пĕтĕм мощноçĕпех ĕçе янипе паллă тăваççĕ. Çĕнĕ корпусра станоксен монтажне тăвасси вĕçленсе пырать. Оборудованин пысăк пайĕ ĕçлет те ĕнтĕ.

СОВЕТ СОЮЗЕ ТĂРĂХ

Лэнин кунĕсене хатĕрленни

Столицăри культура çурчĕсемпе клубсенче Ленин кунĕсене тимлĕн хатĕрленеççĕ. Мускаври учительсен çуртĕнче «В. И. Ленин кĕнекепе мĕнле ĕçленĕ» ятлă выставкăна аслăлатаççĕ. Январĕн 17-мĕшĕнче çуртăн пысăк залĕнче литературăпа музыка вечерĕ пулать. Педагогсем валли «Владимир Ильич Ленинăн образĕ литературăра, музыкăра тата юрăсенче» темăпа доклад туса параççĕ.

Граждăнла Сывлăш флочĕн Центральнăй Çуртĕнче летчиксемпе вĕсен çемьисем валли пысăк вечер пулать. Кунтах ачасен утренникне ирттереççĕ. Ачасем паллă çынсемпе тĕлпуласçĕ. Поэтсемпе писательсем ачасене В. И. Ленин çинчен çырнă произведенисен сыпăкĕсене вуласа параççĕ.

«Красная роза» комбинатри библиотека тата клуб активĕ рабочисем, работницăсем хушшинче Ленин çинчен çырнă кĕнекесене вуласа парассине организацилет. Вуламалли залра Владимир Ильичăн пурнăçĕпе революциллĕ кĕрешĕвĕ çинчен кăтартса паракан выставка хатĕрлеççĕ. (ТАСС).

Колхозниксен йĕлтĕрлĕ кросс

Физкультурăпа спорт ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Пĕтĕм Союзри комитечĕ физкультура ĕçĕн республикăсенчи, крайсенчи тата облаçсенчи комитечĕсене январĕн иккĕмĕш çурийăхĕнче колхозниксен йĕлтĕрлĕ кросне ирттерме кăтарту панă. Çак кросăн задачи—колхозниксен анлă сийĕсене йĕлтĕр спортне явăçтарасси. Çакăнпа пĕрлех вăл комсомолăн Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа пулмалли Пĕтĕм Союзри кросне хатĕрленме пулăшать.

Кросс дистанцийĕ—арçынсем валли 10 километр, хĕрарăмсем валли 3 километр. Кросс вăхăтĕнче пĕрремĕш ступеньлĕ ГТО комплексĕн йĕлтĕр нормисене параççĕ. Çак нормăсене панисен хисепĕ колхозри ĕçлеме пултаракан çынсен миçе процентĕ шутланать, çав процент вара ăмăртăва ăнăçлăн ирттернине кăтартса паракан показатель пулать.

(ТАСС).

Грузин ССР тăрăх. **Укерчĕн çинче:** Рица кÿлли (Абхазия)—Совет Союзĕн чи илемлĕ вырăнсенчен пĕри.
В. Малышев фото-ÿкерчĕкĕ. (ТАСС).

☆

Выигрышсене тÿлес ĕç

Перекет кассисен Главнăй Управленине кашни кунах Виççĕмĕш Пятилетка (иккĕмĕш çулти кăларăм) заемăн облигацийĕсем—çак заем тăрăх пулнă тиражсенче пысăк сумма выляса илнĕ облигацисем—нумай пыраççĕ. Вăл тиражсенче 3-шер пин тенкĕлĕх выигрышсем 296, пиншер тенкĕллĕ выигрышсем 1.480 выигрыш пулнă т. ыт. те.

Анчах та выляса илнĕ облигацисенчен нумайĕшне халĕ те выигрышсем илме тăратман. Перекет кассисене государство заемĕсем çырăнса илнĕ çынсене хăйсен облигацийĕсене тĕрĕслес ĕçре активлăн пулăшма кăтарту панă. Перекет кассисен Главнăй Управленийĕ пĕтĕм заемсен тиражĕсем тăрăх выигрышсен таблицине пичетлесе кăларать. Вăл таблицăна заемсене кăларнăранпа 1941 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен пулнă тиражсем кĕреççĕ.

Кăçалхи çул Виççĕмĕш Пятилетка (иккĕмĕш çулти кăларăм) заемĕ тăрăх татах тăватă тираж пулать. Заемăн çывăх вăхăтри тиражĕ мартăн 8-мĕшпе 9-мĕшĕнче пулать.

(ТАСС).

Театр самодеятельноçĕн смотрĕ

ХАБАРОВСК. Январĕн 15-мĕшĕнче театр самодеятельноçĕн Пĕтĕм Союзри смотрĕн иккĕмĕш турĕ пуçланнă. Крайри вулав çурчĕсенче, клубсенче художествăллă пултарулăх коллективĕсем пурĕ 500 коллектив ытла ĕçлеççĕ. Вяземская станцинчи клубри драмкружок вунă çул хушши ĕçлет ĕнтĕ. Çак вăхăт хушшинче вăл çак пьесăсене лартса панă: «Васса Железнова» — Горькин, «Без вины виноватые» — Островскин, «Не было ни гроша, да вдруг алтын»—Островскин, «Женитьба»—Гоголĕн. Нанай районĕнчи Славянка тата Иннокентьевка поселокĕсенчи художествăллă пултарулăх коллективĕсем смотрта «Наталка-полтавка» тата «Платон Кречет» постановкăсене кăтартаççĕ.

Вырăнти промышленность валли хатĕрленĕ оборудовани

КИЕВ. 1941 çулта Украинăра районри промышленноçăн предприятийĕсене çĕнĕрен 250 предприяти организацилеме пăхнă. Вырăнти промышленноçăн облаçе тата республикăна пăхăнса тăракан предприятийĕсене вакă станоксене, тимĕрç, йывăç каскаламалли тата ытти хатĕрсене массăллăн туса кăларма хушнă, вăл хатĕрсем районри промкомбинатсене йышлăн кирлĕ пуласçĕ. Машинно-тракторнăй станцисемпе МТМ-сенче ахаль выртакан локомобильсем 110 шутланаççĕ. Пĕчĕк ремонт тунă хыççăн вĕсемпе вырăнти промышленноçăн пĕчĕкрех предприятийĕсем усă курма пултараççĕ. Вырăнти промышленность Наркоматĕ УССР Совнаркомĕнчен çав локомобильсене вăй-промкомбинатсене пама ыйтнă.

Ленин кĕнекисене Дагестанри халăхсен чĕлхисемпе кăларни

МАХАЧ-КАЛА. Дагестанри государство издательстви А. И. Ульяновăн «Детские и школьные годы Ильича» ятлă кĕнекине республикăри пиллĕк халăхăн чĕлхипе пичетлесе кăларнă. «Краткая биография В. И. Ленина» кĕнекене авар, кумык тата дардин чĕлхисемпе кăларнă. Кунсăр пуçне, «Сталин о Ленине» сборника лезгин тата кумык чĕлхисемпе кăлараççĕ.

Томскри университетра колхозниксен курсне организацилеменĕ

ТОМСК. Государствăн Куйбышев ячĕпе тăракан университетĕнче колхозниксен пĕлĕвĕсене ÿстермелли районри 15 кунлăх курссем уçнă. Пĕрремĕш группа — бригадир-полеводсем, пурĕ 46 çын, ÿсен-тăрансен пурнăçĕ çинчен, ялхуçалăхне сиен тăвакансем тата вĕсемпе кĕрешесси çинчен, академик Лысенко яровизаци тĕлĕшпе тунă ĕçсем çинчен т. ыт. те научно-популярнăй лекцисем итленĕ. Колхозниксем практикăллă садĕнче тата лабораторийĕсенче ирттереççĕ, гербарисемпе, музейсемпе паллашаççĕ.

СОВЕТЛĂ ЭСТОНИРИ ПОЛИТИКĂЛЛĂ ÇĔКЛЕН�Ў

ТАЛЛИН, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Эстони ССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Варес юлташ ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла каласа панă:

— Историллĕ кун—январĕн 12-мĕшĕнче Эстони СС Республикинчи рабочисем, хресченсем, интеллигенци большевикла партипе совет власне пĕтĕм чĕререн шанса тăнине кăтартса пачĕç. СССР Верховный Советĕн суйлавĕсенче коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕ чаплă çĕнтерÿ турĕ.

Малтанлăха илнĕ даннăйсем тăрăх, суйлавçăсенчен 96 процентĕ сасăланă çĕрĕ хутшăннă.

Суйлав кампанийĕ заводсенче, фабрикăсенче, транспортра производствăллă çĕклеймĕ пуçарса ячĕ. Промышленноçăн чылай отраслисем тăрăх плана ытлашшипех тултарнă. Ударниксен, нумай стахановецсен ĕçлекенсен хисепĕ те чылаях хутшăнчĕ.

Балтийски бумагопрядильнăй тата ткацки мануфактурăри ткачихăсем А. Мадиссон, М. Редель тата Биркенфельд 8-шар станокпа ĕçлеме пуçланă, вĕсем ĕç тухăçлăхне 107—118 процент хăпартнă. Нарвăри Кренгольм мануфактурине ноябрь уйăхĕнче нумай станокпа ĕçлекенсем 38 пулнă, халĕ 116 çын.

Хальхи вăхăтра заводсенчи, фабрикăсенчи, транспортри рабочисем Эстонири коммунистла партин IV съезчĕ тата Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлнă куна производствăра çĕнĕ ситĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

Программа материалне вĕреннĕ май шкул ачисене практикăллă хăнăхусем парасси çинчен*)

ВКП(б) XVIII съездĕнче В. М. Молотов юлташ шкулсем умне пит пысăк та паха задача кăларса тăратрĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче:

«Пит те нумай арçын ачасем тата хĕрачасем вăтам шкулсенчен вĕренсе тухаççĕ, вĕсем нумай чухне ку е тепĕр практикăллă ĕçе каяççĕ, çавăнпа та вăтам шкултан вĕренсе тухас умĕн вĕсен пулас практикăллă ĕçĕ валли хăшпĕр таран та пулин вĕренсе хатĕрленме кирли çинчен ыйту тухса тăрать. Ку вăл пит те кирлĕ ыйту, ку тĕлĕшпе Наркомпроссем, Наркомпроссем кăна та мар, ĕçлеме тивĕç», тесе каларĕ.

Совет учителĕсем ĕнтĕ шкулти вĕрентӳ ĕçне тĕпренех лайăхлатас пысăк задачăна пурнăçа кĕртме тытăнчĕç. В. М. Молотов юлташ кăтартса панине пурнăçа кĕртсе, нумай шкулсенче учительсем программа материалĕсене социализм строительстви практикипе таччăнрах сыхăнтарса вĕрентеççĕ, ачасене çамрăкранах ĕçе хăнăхтарса пыраççĕ.

Анчах пирĕн шкулсенче вĕрентӳпе воспитани ĕçне партипе правительство хушнă пек йĕркелесе ситернĕ, тесе калама пултараймастпăр-ха. Эпир ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1932 çулти августăн 25-мĕшĕнче «Пуçламĕшпе вăтам шкулсенчи вĕрентӳ программисемпе режим çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртессине асра тытатпăр. Ку постановленире учительсен уроксене мĕнле ирттермеллине те кăтартса парса, çапла каланă:

«Преподавателĕн хăй вĕрентекен дисциплинăна система тăрăх, йĕркеллĕн каласа памалла, ачасене пур майсемпе те учебниксемпе кĕнекесем тăрăх ĕçлеме, хăйсем тĕллĕн тĕрлĕрен çыру ĕçĕсене тума, кабинетра, лабораторире, вĕрентӳ мастерскойĕнче ĕçлеме хăнăхтарса пымалла, çак тĕп методсемпе пĕрлех тĕрлĕрен опытсем тăвассипе, приборсем кăтартассипе, экскурсисене (завода, музея, уя, вăрманă т. ыт. çĕре) кайса çӳрессипе анлăн усă курмалла; преподавателĕн ачасене вĕреннĕ чухне килсе тухакан йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма пур майпа та пулăшмалла. Ачасене харпăрхăй тĕллĕн вĕренме пĕрмаях хăнăхтарса пымалла, пĕлӳсен паллă курсне вĕрентсе çитнĕ май тĕрлĕрен заданисем парассине (задачăсемпе упражненисем тăвасси, модельсем хатĕрлесси, лабораторисенче ĕçлесси, гербарисем пухасси, шкулсем çумĕнчи участоксемпе вĕрентӳ валли усă курасси т. ыт. те) анлăн туса пымалла».

Ку вăл кашни учительшĕн пит тĕплĕ те хаклă кăтарту пулса тăрать.

Улттăмĕш çул ĕнтĕ эпĕ математика преподавателĕ пулса ĕçлетĕп. Çак вăхăтра ачасене программа материалне теори тăрăх вĕрентнипех çителĕксĕрринех, вĕсене практикăллă хăнăхусем пани пит те кирлине курса çитрĕм. Шкул ачисене теориллĕ пĕлӳсемпе ĕçре усă курма хăнăхтарса пымасан, практикăллă ĕçе тытăннă чухне вĕсем ăнтăраса тăнисем час-часах пулаççĕ.

Халăх переписне ирттернĕ вăхăтра (1937 тата 1939 çулсенче) эпĕ инструктор-контролер пулса ĕçленĕччĕ. Çак ĕçе эпир вĕрентекен шкулта аслă классенче вĕренекен ачасене те хуттăнтартăмăр. Ун чухне эпир вĕрентекен ачасем бланксене тултарма, цифрăсене лайăх çырма пĕлменнине, хутсене час-часах лапăртанине курмалла пулчĕ. Кун хыççăн эпĕ ачасене ĕçе тĕплĕн тумашкăн хăнăхтарма тытăнтăм. Çак ĕçе контроллĕ тетрадьсене йĕркене кĕртессинчен пуçларăм. Тетрадь—ача мĕнле вĕреннине, учитель мĕнле вĕрентнине, шкул мĕнле ĕçленине кăтартса тăрать. Унччен ачасем пĕр тетрадьрех тĕрлĕ тĕслĕ чернилпа, поля хăвармасăр çыратчĕç, тетрадь страницисенче лапăртанисемпе сăтăрнисем час-часах тĕл пулатчĕç. Тетрадьсене çавăн пек тирпейсĕр тытнишĕн эпĕ отметкăра пĕр очко чакараттăм. Çапла ĕçлени сая каймарĕ, ачасем ĕçе тĕплĕнрех тума, цифрăсене лайăх çырма, тетрадьсене тирпейлĕ тыткалама пуçларĕç. Вĕреннĕ чухнех ĕçе çакăн пек тĕплĕн тума хăнăхнă ачасем документсене (халăх переписĕ чухне государствăн пит те паха документченсене çырнă) тирпейлĕ те тĕплĕн çырасса шанса тăма пулать.

1936 çултанпа эпĕ колхозăн ревизи комиссинче ĕçлетĕп. Ревизи тунă çĕре эпир аслă классенче вĕренекенсене хутшăнтаратпăр (вĕсем колхозниксем). Анчах мĕн курăнчĕ-ха? Пирĕн ученикем, хăйсем часах ĕнтĕ вăтам шкултан вĕренсе тухаççĕ пулин те, счетоводство çинчен пĕртте чухламаççĕ тата шăрçа-шутпа усă курма пĕлмеççĕ иккен. Çакна курнă хыççăн эпĕ вĕренекенсене шăрçа-шутпа усă курмашкăн вĕрентме тытăнтăм тата уроксем хыççăн счетоводствăпа та палаштаратăп. Çапла учет ĕçĕпе паллашни вĕренекенсене практикăллă ĕçре пит те кирлĕ, тесе шутлатăп.

Шкулта вĕренекенсене эпир математика, естествознани, хими, геологи, минералоги предмечĕсене вĕрентетпĕр. Теори тĕлĕшĕнчен вĕсем ку предметсене лайăхах вĕренсе пыраççĕ. Анчах теори тăрăх пĕлнипеле практикăра усă курма пĕлменни те час-часах пулать.

Сăмахран, 1939 çулта кил вырăнĕсене виçнĕ чухне тата 1940 çулта колхоз бригадисен участокĕсене, вăрлăх участокĕсене тĕрĕсленĕ чухне, эпир хамăрăн шкулти аслă классенче вĕренекенсемпе пĕрле ĕçлерĕмĕр. Мĕн курăнчĕ-ха çак ĕçре? Пирĕн ученикем колхоз çĕрĕсен планне вулама, çĕр виçнĕ чух чи ансант инструментсемпе усă курма та пĕлмеççĕ иккен. Уйрăлăхра, вăрманта мĕнле-мĕнле курăксем ӳсеççĕ, — кĕнеке тăрăх кăна вĕрентсен, ачасем çав тĕрлĕрен курăксене те палламаççĕ, тăпрасем çинчен, агрохими çинчен те пĕлмеççĕ. Çакăн пек ан пултăр тесен, теориллĕ пĕлӳсемпе практикăра усă курма хăнăхтарса пырас пулать.

Вĕрентнĕ чухне эпĕ вырăна тухса виçесси, патне пыма çук вырăнсене, площадьсене, тĕрлĕрен япаласен объемне виçесси сине, çавăн пекех тата виçмелли тата хиселемелли тĕрлĕрен приборсемпе, тĕрлĕрен инструментсемпе, таблицăсемпе усă курма хăнăхтарасси сине уйрăмах çавăрăнса пăхатăп. Уроксенче, кружоксен занятийĕсенче тата харпăрхăй тĕллĕн ĕçленĕ чухне эпир вĕренекенсене транспортирпа, угломерпа кругпа, масштаблă линейкăпа, поперечнăй масштабпа, масштаблă циркульпе, кронциркульпе, рулеткăпа, ватерпаспа, уровеньпе, эккерпе, астролябипе, буссольпе, логарифма линейкипе, арифмометрпа т. ыт. те усă курма вĕрентсе пыратпăр.

Пирĕн шкулта кашни урок çинченех класри тетрадь сине çырса пыраççĕ,—ăна ученикем черетпе çыраççĕ, мĕнле çырнине учитель тĕрĕслет. Тата кашни класрах список çакăнса тăрать, унта кашни кунах вĕренекен ачасем кам миçе задача е миçе пример тунине палла тăваççĕ. Çакă та ачасене ĕçе тĕплĕн тума, хăйсен ĕçне хисепе илсе пыма хăнăхтарать.

*) Куславкка районĕнчи учительсен январьти канашлăвĕнче Тĕрлемесри вăтам шкулăн математика преподавателĕ А. К. Герасимов юлташ тунă содокладран.

Обязательнăй йĕркепе пурне те хутла вĕрентессишĕн кирлĕ пек ĕçлемеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Партипе правительство кăтартса панă тăрăх, шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтармалла. Ку ĕнтĕ кашни ялсовет, шкул руководителĕшĕн те паллă. Апла пулин те Çĕмĕрле районĕнче паянхи куна çак ĕçе кирлĕ пек пурнăçа кĕртсе пымаççĕ-ха. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пĕтĕмпе 5127 ачана вĕренĕве явăçтармалла пулнă, хальхи вăхăтра 5009 ача вĕренет. Çапла вара 118 ача шкул тулашĕнче юлнă.

Çак цифрăсем вĕсем уйрăм ялсовет исполкомĕсем, шкул руководителĕсем ачасене вĕренĕве явăçтарассишĕн çителĕксĕр ĕçленине, вĕсене вĕренме кирлĕ пек условисем туса паманнине кăтартса параççĕ. Мăн-Улхаш ялсоветĕнче 30 ачана, Анат-Кăмаша ялсоветĕнче 15 ачана, Çĕмĕрле ялсоветĕнче 14 ачана вĕренĕве явăçтарман.

Çак ялсоветсенчех шкул çулĕнчен иртнĕ ачасене вĕрентесси те япăх пырать. Сăмахран, Мăн-Улхаш ялсоветĕнче 35 ачана, Çĕмĕрле ялсоветĕнче 10 ачана вĕренĕве явăçтарман.

Шкултан юлнă ачасене вĕренĕве явăçтарас тĕлĕшпе ашшĕ-амăшĕсен комитечĕсем те сахал ĕçлеççĕ, хăшпĕр çĕрте ĕçе пачах хутшăнмаççĕ. Мăн-Улхашра ашшĕ-амăшĕсен комитечĕн руководителĕсем миçе ача шкула çӳременнине те пĕлмеççĕ. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Перов юлташ хăй ачасене шкултан пăрахма пулăшать. Çапла, Кочетков, Рябова т. ыт. ачасене вăл «вĕсем тĕрлĕ сăлтавсем пулнă пирки (тумтир, урана тăхăнмалли çук тесе т. ыт. те) шкула каяймаççĕ» тесе справка панă.

Район Совечĕн декабрĕн 21-мĕшĕнче пулса иртнĕ V-мĕш сессинче обязательнăй йĕркепе пурне те хутла вĕрентес ĕç мĕнле пыни çинчен ятарласах сӳтсе-явăçнă. Ку сессинче те уйрăм ялсоветсемпе шкулсем пурне те хутла вĕрентес ыйту çине çиелтен пăхнине палăртрĕç. Тухса калакансем уйрăмăнах ĕçри тĕп çитменлĕхсене кăтартса пачĕç.

— Пирĕн шкулсенче воспитани ĕçне япăх туса пыраççĕ, учительсем ачасем хушшинче çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Гурхан шкулĕнче вĕренекенсем урок хыççăн чĕлĕм туртаççĕ, картла выляççĕ,—терĕ районри прокурор, депутат Лермонтов юлташ сессире.

Депутат Кафтанников юлташ шкулсенче тасалăхшăн çителĕксĕр кĕрешни çинчен, çавна май вĕренекенсем хушшинче чирлекенсем пулни çинчен каларĕ.

— Час-часах шкулсенче вентиляци, вĕретнĕ шыв çук. Шутласассăн вĕсене тума нумай та вăй кирлĕ мар, анчах гемшĕн йĕркелемеççĕ,—тет Кафтанников юлташ.

Сессинче райпотребсоюз, сельпо работникĕсем шкулсене япăх пулăшнине те палăртрĕç. Вĕсем шкулсенчи буфетсене кирлĕ пек продуктсем памаççĕ. Райпотребсоюз айăпĕпех паянхи куна чылай шкулсем учебниксĕр лараççĕ.

Сесси обязательнăй йĕркепе пурне те хутла вĕрентес ĕç районра çителĕксĕр пынине шута илсе, малашне ку тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме конкретлă мероприятисем палăртрĕç. Райпотребсоюз председательне Кузнецов юлташа тата сельпо правленийĕсене çитес вăхăтрах кĕнекесемпе сутă тăвас ĕçе организацилеме, шкулсенчи буфетсен ĕçне лайăхлатма хушса хăварчĕç.

Туçири интеллигенцин ĕçĕсем

Туçири (Çĕрпӳ р.) интеллигенци ял хушшинче, колхозра начар мар ĕçлет Иртнĕ çулта «Цивильстрой» колхоз членĕсем хушшинче интеллигенци политикăлла-массăллă ĕçе йĕркеллĕ туса пычĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче лекцисемпе докладсем чылай ирттернĕ. Çавна пула колхозра ĕç дисциплини çирĕпленсе пырать.

Ялти интеллигенци вăйĕпе 1940 çулта 38 çынна хутла вĕрентсе кăларнă. Çапла ĕнтĕ, интеллигенци колхозниксем хушшинче ĕçлесе пример кăтартса пырать.

Рязань облаçĕнчи Федякино ялĕнчи интеллигенци чĕнсе каланине ялти интеллигенци хапăл туса йышăнчĕ. Федякинецсен чĕнĕвне ĕçпе ответлеме тытăнчĕç. План туса хатĕрленĕ. Çав план тăрăх, ялти интеллигенци халĕ кунсеренех лекцисем, докладсем туса ирттерет. Ялти интеллигенци хăй çине илнĕ обязательствăсене йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пырать.

Çавăн пекех вулав çурчĕ çумĕнчи совета çĕнетрĕмĕр. Çавăнтах лекторсен группине организацилерĕмĕр. Лекторсен группи 14 интеллигентран тăрать: вăл шутран 4 коммунист, 8 комсомолец.

Кăçал хĕллехи вăхăтра колхозниксем хушшинче политика, агротехника, тĕне хирĕçле, географи т. ыт. ыйтусем тăрăх лекцисемпе докладсем 41 кая мар пулса иртмелле. Ялти учительсем хутла пĕлменнисене майăн 1-мĕш тĕлне вĕрентсе кăларма обязательство илчĕç.

Федякинецсен чĕнĕвне пурнăçлас майпа, вулав çурчĕ çумĕнче тĕрлĕрен кружоксем организациленĕ. «Цивильстрой» колхоз çумĕнче агрокружок ĕçлет. Занятисем эрнере 2 хут пулса иртеççĕ, халĕ 6 хутчен пулса иртнĕ. Кружока Прокопьев стахановец ертсе пырать.

Я. Тимофеев.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарта, Заводская урамĕн вĕçĕнчи улăхра, йĕлтĕрпе яранмалли трамплин тăваççĕ. Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНĂ ХЫÇĂН

ЗАПЯТОЙСЕМ

Пĕр пухура председатель вăхăтран вăхăта залра ларакан çынсене ура çине тăма ыйтнă. Оратор унăн ыйтăвне ăнланмасăр, мĕншĕн апла тунине ыйтсан, председатель çапла ответ панă: «Мĕншĕн тесен, çынсене сывăрса кайма парас мар тетĕп», тенĕ.

Михаил Иванович Калинин çак эпизода илсе кăтартса, «аудиторине сывăратасси нимĕн тĕпне те тăмасть, тесе палăртнă. Ку тĕлĕшпе гипнотизер пулни те кирлĕ мар иккен, оратор вăл тепĕр чухне хăйĕн доклачĕпех аудиторине сывăратма пултарать.

Эпир кунта ораторсем çинчен каламастпăр. ВКП(б) райкомĕпе ĕççынни депутачĕсен Калининский район Советĕн органĕ — «Коммунизм ялавĕ» хаçат çинчен сăмах пырать. Ку хаçат вăрăм предложенисенче час-часах хăшпĕр вырăнсенче кăштах чарăнса тăма запятойсем лартма тăрăшать. Вулакансем ăна ăнланмасăр, мĕншĕн апла тунине ыйтсан, вăл ыйту çине редакцинче ĕçлекенсем: «пур вăрăм предложенисене те сире ăнланмалла тума тăрăшатпăр», теççĕ. Капла каласан хаçат вулакансем майлă пулнине гата вĕсем патне сывăрма тăрăшнине кăтартса панă пек туйăнать. Лайăх, анчах редакци сотрудникĕсене (редакторĕ Е. Ф. Воробьев) вăл вăрăм предложенисене çырнă чухне хăшпĕр тĕлте запятойсем лартмалла пулни нумай кансĕрлет, пĕр запятой та лартмасан, предложени илемсĕртерех пек курăнать. Мĕнле тумалла? Кансĕрлет-и мĕн вăл запятой? Аçта май килет, вăл вырăнта хитререх курăнать пулсан, ларт та хур!

Çапла, «Коммунизм ялавĕ» хаçат 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнче тухнă 3(184)-мĕш номерте, Калининский район Совет исполкомĕн решенине пичетлерĕ. Аçта-аçта кунта запятойсем лартмалла ĕнтĕ?

«Созвать»... — Давай, лартăр, запятой кирлĕ кунта. Вăл сăмах хăй пĕр предложени пулма пултарать. Малалла? «29-го января 1941 года»...—Тăхта, кунта каллех запятой кирлĕ пулать. Мĕншĕн тесен, вăл хушса кĕрсе юлнă сăмах, çавăнпа унăн умĕн те хыçалтан та запятойсем лартаççĕ. Унтан? «В с. Калинино Пятую Сессию Калининского районного Совета депутатов трудящихся...» — чарăн-ха, запятая ларт, кирлĕ. Вара? «Чувашской АССР с повестской дня»... — «Повестскойра» «т» хыççăн «с» кирлĕ мар, кăларса пăрах. Пулчĕ-и? Халĕ мĕнле ĕнтĕ, пĕтĕмпе вула-ха?

«Созвать, 29-го января 1941 года, в с. Калинино Пятую Сессию Калининского районного Совета депутатов трудящихся, Чувашской АССР с повестской дня», — тĕрĕс. Запятойсем те пур тата вулакансене те ăнланма лайăхланчĕ.

Ку предложенире пĕр запятой та лартман пулсан тата лайăхрахчĕ, вулакансене вăл ăнланма пĕртте кансĕрлес çукчĕ.

«Çырма пĕлетпĕр те, çав, мур, запятойсем нумай чăрмантараççĕ»—теççĕ пулмалла «Коммунизм ялавĕ» редакцинче ĕçлекенсем. Çакăн пирки те вĕсем предложенисенче тăтăшах запятойсем лартаççĕ. Эпир ăна хирĕç мар, анчах ăна пĕлсе, хăйсен тĕп вырăнне кĕртсе лартмалла. Акă, тĕрĕсрех пултăр тесе, тепрер факт:

«Халĕ ĕнтĕ, колхозсенче вăрман ĕçне организацилессине тимлесех тытăнмалла».

«Вăл, ку майпа государствăна сĕтĕу парассинчен татăк ялхуçалăх налогĕ тӳлессинчен пăрăнасăн пулнă».

«Асăннă цифрăсем, эпир вăрман ĕçĕнче лăпланса ларни çинчен кăтартаççĕ».

«Район Совечĕн исполкомĕн заседанийĕ, январĕн 7-мĕшĕнче районри колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче епле ĕçленине сӳтсе-явăçлерĕ». Кирлĕ-и вăл запятойсем?

Район Совечĕн исполкомĕшĕн колхозниксем вăрманта январĕн 7-мĕш кунĕнче ĕçлени уйрăмăнах интереслă пулнă пулмалла. Хаçат çырнă тăрăх, райсовет исполкомĕ пĕр çав кунхи вăрман хатĕрлевĕ çинчен кăна сӳтсе-явнă пек курăнать.

Эпир ку строкасенче «Çĕмĕрлĕ», «пуçăнă», «социализмлă», «колхозсенче» тата ытти çавнашкал сăмахсем çинчен чарăнса тăмастпăр та. Вĕсене те, тен, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакци сотрудникĕсен шучĕпе, запятойсем пекех, çав-çав предложенисенче çавнашкалах çырмалла. Апла пулсан вĕсен чăваш чĕлхи грамматикине тимлесе вĕренме тытăнмалла.

Çамрăк коммунистсен ӳсĕмĕ

ВКП(б) Советский районри чылай пуçламăш парторганизацисенчи çамрăк коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлӳне ӳстерсе пыраççĕ, партиллĕ ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Тойкильдри Е. Ерусланова, Турайри Салтыков, Асламасри Яковлев юлташсем Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин çырнă произведенисене вуласа вĕренме тытăннă.

«Сатурн» колхозри рядовой колхозник пулса ĕçленĕ çамрăк коммунист Е. Яковлев юлташ колхозниксем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать. Ăна колхозниксем колхоз правлени председательне суйларĕç.

(Хамăр информаци).

Партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас ыйту коммунистсен районри пухăвĕнче

Иртнĕ çулти декабрĕн юлашки кунĕсенче Калининский районри коммунистсен пухăвĕ пулса иртнĕ. Çак пухура районри колхозсенче, ялсенче партиллĕ-политикăллă ĕçе мĕнле туса пыни, ăна хуçалăхлă ĕççемпе сыхăнтарасси мĕнле тăни çинчен сӳтсе-явнă. Пуху районра партиллĕ-политикăллă ĕç çителĕксĕр тăнине палăртнă. Сăкăтри, Шĕнерти, Юнтапари пуçламăш парторганизацисем халăх хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе начар туса пыраççĕ. (Хамăр инфор.).

Ухсай Янкăвĕ

Çамрăксен юррисем

(«Тимĕр карта» ятлă драмăран)

1. ПАТТАРСЕМ ÇИНЧЕН ХУНА ЮРА.

Чаплă та хастар Чапаев
Çапăçнă уйхирсенче
Сарă тулă, тулă лайăх
Хумханать çил айĕнче.

Юн çинче кашланă тырă
Хумханать те хумханать,
Çавăнпа та пурнăç ырă,
Пирĕн халăх савăнать.

Асăнатпăр каçăн-ирĕн
Вилнĕ тăвансем çинчен,
Пучахсем шăтаççĕ пирĕн
Паттăрсен чĕрисенчен.

Иĕкĕр капансем хăпарчĕç
Сакăртар ура çинче,
Ушкăн-ушкăн кавакарчăн
Явăнать анкартинче.

Шăратар юрра хаваслăн, —
Янтăраччăр улăхсем,
Кĕр-кĕрлер-ха, уçă саслă
Шăпчăксем пек çамрăксем.

2. ТАШĂ ТАКМАКЕ

Чĕнтĕрленĕ кĕперпе
Пĕрлĕхен пек кĕпене

Иртрĕ каччă. Куртăр-и:
Теветкел-и, паттăр-и?

Пĕр пусать те кĕпере
Кĕр те кĕр кĕрлеттерет.

Тепĕр хут пусать, кĕпер
Купăс пек янтрать чипер.

Чул кĕперĕн кĕввине
Илтсе ташлăр ташшине,

Атă тĕпĕ ăнсăртран
Пăтăр-патăр хăйпăнсан,

Тытăр каччăн çухинчен,
Сырăр акт инкек çинчен.

Лайăх пултăр, хăвăртрах
Виçĕ хут тӳлетĕр штраф.

Кивĕ атă вырăнне
Илсе патăр çĕннине,

Çĕннине те саррине,
Кăвакал сăмсаллине.

Ан калатăр малашне
Чул кĕперĕн кĕввине.

3. ТАВТАПУÇ ВАТТИСЕНЕ.

Тирексем пек тӳрĕ пӳллĕ
Каччăсемĕр ирхине
Иĕнерленĕ самăр, çӳлĕ
Чăп-чăпар лашисене.

Хирсемпе вĕсем пыраççĕ
Вылятса чĕлпĕрсене,
Юрласа ян-ян ярасçĕ
Сĕм хура вăрмансене.

Хăюсем тыттарăр, çакăр
Учĕсен çилхисене.
Савăнса туятпăр çакă,
Çакă пурнăç тивлетне.

Çакăн пек пире илемлĕ
Ырă пурнăç телейне
Кăтартнишĕн чăн хисеплĕх
Тавтапуç ваттисене.

Январь, 1941 ç.

БИБЛИОГРАФИ

Чаплă пурнăç çинчен калакан кĕнеке

Владимир Ильич Ленин (кĕске биографи). Чăваш АССР Государство издательстви. Шупашкар. 1940 çул.

1940 çулта В. И. Ленинăн кĕске биографийĕ чăвашла пичетленсе тухрĕ. Çак пысăк мар кĕнекере В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа панă.

В. И. Ленин çамрăкранпах хăйĕн пĕтĕм вăйне тата пурнăçне пролетариат революцин ĕçне панă.

Ленин пролетариллĕ партин пирвайхи пуçламĕшне — Петербургри «Союз борьбы за освобождение рабочего класса» ятлă организацине тăвать. Ленин народничествăна хирĕç вăйлă кĕрешӳ пуçарса ярать те народниксем — халăхăн чăн-чăн тусĕсем маррине, халăхăн чăн-чăн тусĕсем марксистсем пулса тăнине, вĕсем кăна царизма пĕтерессишĕн сине тăрса кĕрешекенсем пулнине кăтартса парать. Çавăн пекех Ленин «легальнăй марксизма» вирлĕн çапса хуçас ĕçе туса пырать.

Вăл социал-демократла уйрăм организацисене рабочи класăн пĕрлĕхлĕ партине пĕрлештерес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнать. Ку ĕçе пурнăçа кĕртме вăл ютçĕршывра «Искра» хаçат организацилет. Ленин рабочисен движенине социализмпа пĕрлештерсе, теории, ăстăнлăхăн пĕлтерĕшне çӳле çĕклес, партие рабочисен стихийăллă движенине революцилентерсе тата ертсе пыракан вăй тăвас тĕлĕшпе питех те хастарлăн кĕрешнĕ.

Партин II съездĕнче Ленин рабочисен пĕр-пĕтĕм организациллĕ тата пĕрлĕхлĕ партине тăвас ĕçе çине тăрса хӳтленĕ, çирĕп парти пуçпулса ертсе пымасан пролетариат çĕнтерме пултараяс çуккине кăтартса панă. Партин III съезчĕ, Ленин ертсе пынипе, пролетариатăн революцийлĕ линийĕ мĕнле пулмаллине, рабочисем революцире çĕнтерессине мĕнле пурнăçа кĕртмеллине кăтартса панă.

1905 çулта революцийлĕ движени питĕ вăйланса тата çивĕчленсе кайнă. 1912 çулта Троцкий большевиксене хирĕç кĕрешме «августовский блок» организацилеНĕ. Унта «большевизма хирĕç тăракан мĕнпур тăшманла социал-демократиллĕ юхăмсемпе группăсем пĕрлешнĕ. Троцкий меньшевиксене пролетариллĕ партие хирĕç кĕрешме пулăшса пынă, вак-тĕвек чăкăлтăшсемпе хăтланнă, хирĕçӳсем тунă, большевиксем çине элекленĕ. Троцкие хирĕç Ленинăн хаярăн кĕрешмелле пулнă. Ленин ăна, унăн икĕпитлĕхĕпĕн, пушă параппан çапнăшăн, «Иудушка», «Балалайкин» тенĕ. Троцкий партие хирĕçле элементсен блокне тума тăрăшнисем пурте ун чухне те пĕтĕмпех ăнăçсăр пĕтнĕ. Большевиксем Ленин ертсе пынипе çĕнтерӳсем туса, рабочи класа хăйсем хыççăн илсе пынă.

Империализмлă пĕрремĕш вăрçă пуçланса каять. Çак вăрçăн империалистла характерне большевиксен партийĕ пĕтĕм хаярлăхпа тăрă шыв сине кăларнă. Ленин ертсе пынă большевиксем çав вăрçăра патша правительстви поражени тӳсни революцие çывхартать, тесе каланă. Россиăри большевикла парти вăрçа тĕп тума, çав вăрçăран граждăн вăрçи туса яма, революци тума чĕнсе воззвани кăларнă. Плеханов ертсе пынă оборонецсене, меньшевиксене хирĕç, вăрçă туса пыма хăйсен çĕршывĕнчи буржуазине пулăшассишĕн тăнă «социалистсене» хирĕç Ленин хăватлăн кĕрешсе пынă.

Империализмлă вăрçă вăхăтĕнче çырнă произведенисенче Ленин социализм капитализмлă пур çĕршывсенче те пĕр вăхăтра çĕнтерме пултарайманнине, вăл малтанлăха уйрăмăн илнĕ капитализмлă пĕр çĕршывра е темиçе çĕршывра çĕнтерме пултарнине кăтартса панă.

Февральти революци хыççăн Ленин Российăна таврăннă. Унăн апрельри тезисĕсем партин буржуаллă демократиллĕ революцирен социализмлă революци патне куçассишĕн кĕрешмелли геннийĕ планĕ пулнă. Ленинăн апрельри тезисĕсене хирĕç Каменев, Рыков предательсем тата буржуази хыççăн пыракан, капитализма сыхласа хăварассишĕн тăрăшакан ытти пӳтĕльнăй йĕркепе пурне те хутла вĕрентес ĕç мĕнле пынине çинчен ятарласах сӳтсе-явăçнă. Ку сессинче те уйрăм ялсоветсемпе шкулсем пурне те хутла вĕрентес ыйту çине çиелтен пăхнине палăртрĕç. Тухса калакансем уйрăмăнах ĕçри тĕп çитменлĕхсене кăтартса пачĕç.

— Пирĕн шкулсенче воспитани ĕçне япăх туса пыраççĕ, учительсем ачасем хушшинче çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Гурхан шкулĕнче вĕренекенсем урок хыççăн чĕлĕм туртаççĕ, картла выляççĕ,—терĕ районри прокурор, депутат Лермонтов юлташ сессире.

Депутат Кафтанников юлташ шкулсенче тасалăхшăн çителĕксĕр кĕрешни çинчен, çавна май вĕренекенсем хушшинче чирлекенсем пулни çинчен каларĕ.

— Час-часах шкулсенче вентиляци, вĕретнĕ шыв çук. Шутласассăн вĕсене тума нумай та вăй кирлĕ мар, анчах гемшĕн йĕркелемеççĕ,—тет Кафтанников юлташ.

Сессинче райпотребсоюз, сельпо работникĕсем шкулсене япăх пулăшнине те палăртрĕç. Вĕсем шкулсенчи буфетсене кирлĕ пек продуктсем памаççĕ. Райпотребсоюз айăпĕпех паянхи куна чылай шкулсем учебниксĕр лараççĕ.

Сесси обязательнăй йĕркепе пурне те хутла вĕрентес ĕç районра çителĕксĕр пынине шута илсе, малашне ку тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме конкретлă мероприятисем палăртрĕç. Райпотребсоюз председательне Кузнецов юлташа тата сельпо правленийĕсене çитес вăхăтрах кĕнекесемпе сутă тăвас ĕçе организацилеме, шкулсенчи буфетсен ĕçне лайăхлатма хушса хăварчĕç.

Туçири интеллигенцин ĕçĕсем

Туçири (Çĕрпӳ р.) интеллигенци ял хушшинче, колхозра начар мар ĕçлет Иртнĕ çулта «Цивильстрой» колхоз членĕсем хушшинче интеллигенци политикăлла-массăллă ĕçе йĕркеллĕ туса пычĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче лекцисемпе докладсем чылай ирттернĕ. Çавна пула колхозра ĕç дисциплини çирĕпленсе пырать.

Ялти интеллигенци вăйĕпе 1940 çулта 38 çынна хутла вĕрентсе кăларнă. Çапла ĕнтĕ, интеллигенци колхозниксем хушшинче ĕçлесе пример кăтартса пырать.

Рязань облаçĕнчи Федякино ялĕнчи интеллигенци чĕнсе каланине ялти интеллигенци хапăл туса йышăнчĕ. Федякинецсен чĕнĕвне ĕçпе ответлеме тытăнчĕç. План туса хатĕрленĕ. Çав план тăрăх, ялти интеллигенци халĕ кунсеренех лекцисем, докладсем туса ирттерет. Ялти интеллигенци хăй çине илнĕ обязательствăсене йĕркеллĕ пурнăçа кĕртсе пырать.

Çавăн пекех вулав çурчĕ çумĕнчи совета çĕнетрĕмĕр. Çавăнтах лекторсен группине организацилерĕмĕр. Лекторсен группи 14 интеллигентран тăрать: вăл шутран 4 коммунист, 8 комсомолец.

Кăçал хĕллехи вăхăтра колхозниксем хушшинче политика, агротехника, тĕне хирĕçле, географи т. ыт. ыйтусем тăрăх лекцисемпе докладсем 41 кая мар пулса иртмелле. Ялти учительсем хутла пĕлменнисене майăн 1-мĕш тĕлне вĕрентсе кăларма обязательство илчĕç.

Федякинецсен чĕнĕвне пурнăçлас майпа, вулав çурчĕ çумĕнче тĕрлĕрен кружоксем организацилеНĕ. «Цивильстрой» колхоз çумĕнче агрокружок ĕçлет. Занятисем эрнере 2 хут пулса иртеççĕ, халĕ 6 хутчен пулса иртнĕ. Кружока Прокопьев стахановец ертсе пырать.

Я. Тимофеев.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарта, Заводская урамĕн вĕçĕнчи улăхра, йĕлтĕрпе яранмалли трамплин тăваççĕ. Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНĂ ХЫÇĂН

ЗАПЯТОЙСЕМ

Пĕр пухура председатель вăхăтран вăхăта залра ларакан çынсене ура çине тăма ыйтнă. Оратор унăн ыйтăвне ăнланмасăр, мĕншĕн апла тунине ыйтсан, председатель çапла ответ панă: «Мĕншĕн тесен, çынсене сывăрса кайма парас мар тетĕп», тенĕ.

Михаил Иванович Калинин çак эпизода илсе кăтартса, «аудиторине сывăратасси нимĕн тĕпне те тăмасть, тесе палăртнă. Ку тĕлĕшпе гипнотизер пулни те кирлĕ мар иккен, оратор вăл тепĕр чухне хăйĕн доклачĕпех аудиторине сывăратма пултарать.

Эпир кунта ораторсем çинчен каламастпăр. ВКП(б) райкомĕпе ĕççынни депутачĕсен Калининский район Советĕн органĕ — «Коммунизм ялавĕ» хаçат çинчен сăмах пырать. Ку хаçат вăрăм предложенисенче час-часах хăшпĕр вырăнсенче кăштах чарăнса тăма запятойсем лартма тăрăшать. Вулакансем ăна ăнланмасăр, мĕншĕн апла тунине ыйтсан, вăл ыйту çине редакцинче ĕçлекенсем: «пур вăрăм предложенисене те сире ăнланмалла тума тăрăшатпăр», теççĕ. Капла каласан хаçат вулакансем майлă пулнине гата вĕсем патне сывăрма тăрăшнине кăтартса панă пек туйăнать. Лайăх, анчах редакци сотрудникĕсене (редакторĕ Е. Ф. Воробьев) вăл вăрăм предложенисене çырнă чухне хăшпĕр тĕлте запятойсем лартмалла пулни нумай кансĕрлет, пĕр запятой та лартмасан, предложени илемсĕртерех пек курăнать. Мĕнле тумалла? Кансĕрлет-и мĕн вăл запятой? Аçта май килет, вăл вырăнта хитререх курăнать пулсан, ларт та хур!

Çапла, «Коммунизм ялавĕ» хаçат 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнче тухнă 3(184)-мĕш номерте, Калининский район Совет исполкомĕн решенине пичетлерĕ. Аçта-аçта кунта запятойсем лартмалла çĕнтĕ?

«Созвать»... — Давай, лартăр, запятой кирлĕ кунта. Вăл

Выльăх-чĕрлĕхсем ăшă çĕрте, тутă хĕл каçчăр!

Малта пыракан колхозсем.

ÇЕРПУ. Малта пыракан колхозсем ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ «Колхозсенче общественнăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пынă май чылай çитĕнӳсем турĕç. «Емĕт» ята Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарчĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта çĕнĕрен сысна, чăх-чĕп тата хур фермисем организацилерĕ. Халĕ кунта 6 ферма. Çакăн пекех «Емĕт» колхозра та 6 ферма организациленĕ.

Çак колхозсенче фермăсен тата унта ураканвыльăх-чĕрлĕх шучĕ ӳсни колхозсене пысăк тупăш парать. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1939 çулта ĕне ферминчен 50.629 тенкĕ тупăш илнĕ пулсан, 1940 çулта 88.542 тенкĕ тупăш илчĕ. 1939 çулта кашни ĕнерен вăтам шутпа 1713 литр сĕт суса илнĕ пулсан, иртнĕ çулта 2054 литр суса илчĕç. «Дочка» ятлă ĕне вăтам шутпа кунне 20 литр сĕт парать. «Емĕт» колхозра 1939 çулта пĕр ĕнерен 775 литр сĕт суса илнĕ пулсан, иртнĕ çулта 1600 литр сĕт суса илнĕ.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри дояркăсем 1941 çулта кашни ĕнерен 3000-шер литр тата «Емĕт» колхозри дояркăсем 2000-шер литр сĕт суса илме социализмлă ăмăртăва тухнă.

Çак çитĕнӳсене мĕнле тунă-ха? Фермăсенче ĕçлеме выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе юратакан работниксене суйласа лартнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз фермисенчи работниксем пурте 3 çултан кая мар ĕçлеççĕ. «Емĕт» колхозри скотник Семенов юлташ 7 çул хушши пĕр улшăнмасĕр, бригадир Белкин юлташ 3 çул ĕçлет. Колхоз правленийĕ фермăри работниксене хĕл вăхăтĕнче ĕçлемелли йĕркене çирĕплетсе панă. Çак йĕркене çирĕппĕн пăхăнаççĕ.

Фермăри работниксем ирхине 4 сехетре ĕçе тухаççĕ. Енесене кунне виçĕ хут, сĕт нумай параканнисене 4 хут сăваççĕ. Сума тытăнас умĕн çиллине ăшă шывпа çуса, тутăрпа шăлса типĕтеççĕ те массаж тăваççĕ. Кун хыçăн сума тытăнаççĕ. Суса пĕтерес умĕн каллех тепĕр хут массаж туса çилле пĕр тумлам сĕт юлмиех суса пĕтереççĕ. Енесене ирхине сунă хыçăн тутă тытакан апатсем çитереççĕ. Ун хыççăн ĕнесене щеткăсемпе тасатаççĕ. Шăварнă хыççăн утă-улăм паçççĕ. Енесене кăнтăрла сунă хыççăн сĕткенлĕ апатсем параççĕ. Каçхине хытă апатсем çитернĕ хыççăн ĕнесене суса çĕр каçма хупса хăварăççĕ. Çапла майпа ĕçлесе Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал иртнĕ çулхинчен кашни фуражлă ĕнерен 341 литр, «Емĕт» колхоз 825 литр сĕт ытларах суса илчĕç.

Хытă апатсене (улăмсене) 3—5 сантиметр вăрăмĕш тураса çитереççĕ. Çапла майпа выльăх апачĕ перекетлĕн расходланса пырать Сĕткенлĕ апатсене зоотехника кăтартнă норма тăрăх параççĕ. «Емĕт» колхоз кашни сăвакан ĕне пуçне икĕ тонна çурă силос хатĕрлерĕ.

Çак колхозсенче фермăсенчи выльăхсене стандартлă çуртсенче усраççĕ. Хĕллехи сивĕсенче ĕне витисенче 6—8 градус ăшă тăрать.

«Емĕт» колхоз 1941 çулта ĕне витине автопоилка кĕртме хатĕрленет. Енесене кунне виçшер хут ăшă шывпа шăвараççĕ.

Фермăри работниксене ĕçкунне çĕнĕ инструкци тăрăх, вĕсем ĕçленине кура шутласа параççĕ. Сăвăнпа та фермăра ĕçлекен работниксем хăйсене çирĕплетсе панă выльăхсене лайăхрах пăхма тата вĕсенчен ытларах тупăш илме тăрăшаççĕ. Кашни работнике уйăх тăрăх производствăллă заданисем туса панă. Дояркăсем хăйсен производствăллă заданийĕ тăрăх çулталăкра кашни ĕнерен мĕнчухлĕ сĕт суса илмеллине лайăх пĕлеççĕ. Задание пурнăçласситшĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешеççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри уйăрăм дояркăсем иртнĕ çулта 736-шар ĕçкунĕ тунă.

Çакăн пек аван тĕслĕхсем татах та пур. Анчах та кая юлса пыракан колхозсем çинчен асăнмалла. «Красный флот» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарса пымасть. Выльăхсене хĕл кунĕсенче сивĕ витере тăратаççĕ. Стандартлă çурт-йĕрсем пĕрре те çук. Çамрăк пăрусене кирлĕ пек пăхса ӳстермеççĕ. Фермăра ĕçлекен работниксем час-часах улшăнса тăраççĕ. Зоотехника учетне йĕркелесе çитереймен. Çулталăкра кашни ĕне уйрăмăн мĕн чухлĕ сĕт панине пĕлме питĕ йывăр. Колхоз правленийĕ ĕçкунĕсене тĕрĕс шутласа памасть.

В. ИГНАТЬЕВ.

Çĕрпӳ райçĕрĕç пайĕн старший зоотехникĕ.

Пĕр амаран 25 çăвăр

ОКТЯБРЬСКОЕ. Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз ферминче 131 сысна, вăл шутран 35 ама. 1940 çулта колхоз кашни амаран 10 çăвăр пăхса çитĕнтерме палăртнă. Фермăри работниксем çакăншăн тăрăшса ĕçлерĕç. Кашни амаран 12 çăвăр пăхса ӳстернĕ.

«Рутька» ятлă ама çулталăкра 25 çăвăр туса панă. Вĕсем пурте ӳссе çитĕннĕ. Çăвăрсене аван пăхса çитĕнтернĕмĕн колхоз правленийĕ фермăри работниксене ĕçкунĕсем хушса пачĕ: И. Судова 54 ĕçкунĕ, П. Давыдăва 49 ĕçкунĕ, Н. Сотникова 64 ĕçкунĕ тата Х. Кудряшовăна 46 ĕçкунĕ панă.

Колхоз 1940 çулшăн государствăна аш-какай тăратмалли плана тултарса 1941 çулшăн та 2300 килограмм пачĕ.

Халĕ фермăра ĕçлекенсем çитес çулта татах та нумай çăвăр çитĕтерме ĕмĕтленеççĕ. Сыснасене хĕл каçарма 494 центнер çĕрулми тата ытти апатсем çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Ф. ДАНИЛОВ.

Арбуз сутса 26 пин тенкĕ тупăш илнĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Аслă Çĕрпӳелĕнчи «Культура» колхозра 1937 çултан ӳçласа арбуз туса илме тытăннă. Малтанхи çулсенчех арбуз ăнса пулнă. Çакăн хыççăн колхоз кашни çулах арбуз туса илме тытăнчĕ. Иртнĕ çулта 0,60 гектар çинче туса илнĕ арбуза сутса колхоз 26 пин тенкĕ тупăш курнă.

1939 çулта колхозра сад-пахчи ĕртметме тытăннă. Унта 396 тĕп улмуççи лартнă. Вĕсем лайăх ӳсеççĕ. Сад-пахчинче А. Юманова, О. Михайлова, В. Васильева колхозницăсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Н. Волков.

Столовăйсемпе ресторансенче ĕçлекенсем тунă çитĕнӳ

Шупашкарти столовăйсемпе ресторансенче ĕçлекенсем 1940 çула чаплă çĕнтерӳсемпе вĕçлерĕç. Таварçаврăнăш планне вĕсем 130 процент тултарнă.

Трестра ĕçлекенсен ĕç тухăçлăхĕ 1940 çулта 22 процент хăпарнă. Çапла майпа трестăн 294 пин тенкĕ перекетленнĕ. 1940 çулти çитĕнӳсем малашне татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантараççĕ. ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, трестра ĕçлекенсем 1941 çулта татах та чаплăрах çĕнтерӳсем тума, культурлăрах, тухăçлăрах ĕçлеме сăмах пачĕç. Партин XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле вĕсем 1-мĕш кварталти таварçаврăнăш планне 60 процент тултарма, ĕç тухăçлăхне 5 процент ӳстерме обязательство илчĕç.

Çар ĕçне вĕрентеççĕ

СЕНТЕР. Районра Осоавиахим членĕсене çар ĕçне ăнăçлăн вĕрентсе пыма тытăнчĕç. Çар ĕçне вĕренмелли отрядсем, командăсем тата группăсем организациленĕ. Вĕсенче пурĕ 963 çын вĕренет.

Çар ĕçне вĕренессине уйрăмах Шомик ялсоветĕнчи «Колос» колхозра аван йĕркеленĕ. Группăсен командирĕсем пулса взпасра тăракан командирсем, Хĕрлĕ Çартан таврăннă красноармеецсем ĕçлеççĕ. Группăсенче 4 заняти ирттернĕ. Занятисене Бычков, Ефремов, Слепнев юлташсем тĕплĕн хатĕрленсе ирттереççĕ.

Ювановăри Сталин ячĕпе тăрăкан колхозра кавалеристсен группине организациленĕ. Группăра 13 çын вĕренет. Виçĕ заняти ирттернĕ те ĕнтĕ.

С. Налимов.

ВĂРМАН ХАТĔРЛЕВĔ

Вăрманпромхозсен ăмăртăвĕ

Улатăр вăрманпромхозĕн коллективĕ социализмлă ăмăртăва тухма чĕнни хыççăнах пуçламĕш парторганизаци ун çинчен рабочисемпе служащисене ăнлантарса пама тытăнчĕ. Агитаторсем цехсенче, мастерской участокĕсенче пухусем, калаçусем ирттерчĕç. Рабочисем ăмăртăва тухма чĕннине йышăнса, ВКП(б) XVIII конференцине çитĕнӳсемпе кĕтсе илме обязательствăсем илчĕç. Атратьри вăрманпунктĕнче вăрман-каснă çĕрте ĕçлекенсем В. Седойкин, Мартынов юлташсем конференци уçăлнă тĕле пĕрремĕш квартал планне 75 процент тултарма, шофер, ВКП(б) членĕн кандидачĕ Соболев юлташ 80 процент тултарма сăмах пачĕç. Атратьри вăрманпунктĕнче ĕçлекенсем Гартри мастерской участокĕнчи рабочисемпе, шоферсем Кирери шоферсемпе ăмăртăва тухнă. Участоксем, бригадăсем, шоферсем пĕр-пĕринпе ăмăрту договорĕсем тăваççĕ.

Пĕрремĕш кварталти плана срокра тултарас пулсан вăрманта кашни кун 450 çын тата 388 çын лашапа ĕçлемелле. Анчах халĕ ĕç вăйĕ çителĕксĕр-ха. Ĕç вăйĕ тăратас тĕлĕшпе уйрăмăнах Кувакино, Пăрачкав районĕсенче ĕçсем начар. Сăмахран, Пăрачкав районĕнчен çураннисем 100 çын тата 90 çын лашапа ĕçлемелле, халĕ çуранниссем 37 çын, лашапа 48 çын çеç ĕçлеççĕ. Комсомольский районри колхозсем 1940 çулти IV-мĕш кварталта 11700 кубометр вăрман хатĕрлес вырăнне пурĕ те 1882 кубометр çеç хатĕрленĕ. Турттарас плана та тултарман. «Пролетарий», «Коммунар», «Победа», «Дубровна» колхозсем вăрманта ĕçлеме пĕр çын та яман. Пăрачкав районĕнчи колхозсем вăрман хатĕрлес ĕçе пурте хутшăнман. Çавăнпа ĕнтĕ 1940 çулти IV-мĕш квартал планне касса хатĕрлес тĕлĕшпе 11,3 процент çеç тултарнă. Колхозсен хăйсем вăрман хатĕрлекен организацисемпе тунă договорсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас пулать. Ялан вăрманта ĕçлекен бригадăсем организацилени пысăк усă парать. Вăрманта 2 — 3 уйăх ĕçлекенсен ĕçукçи пĕрмаях ӳссе пырать. Акă тĕслĕхсем: стахановецлучкист Сальков юлташ вăрман хатĕрлевĕнче 1939 çулти сентябрь уйăхĕнченне ĕçлет. Вăл сезонра 170 — 190 норма тăвать. Халĕ хĕллехи сезона кĕнĕренпе кашни кунах нормăна 150 процент тултарса пынă. Çапла 110 норма тунă. Тĕп ĕçукçисĕр пуçне (ĕçукçи 737 тенкĕ пулнă) прогрессивлă надбавка 147 тенкĕ, преми-надбавка 704 тенкĕ илнĕ. Кашни кун 25 тенкĕ те 21 пус ĕçлесе илнĕ. Обозра ĕçлекен возчик-стахановец Храмченко юлташ хĕллехи сезона кĕнĕренпе декабрĕн 15-мĕш тĕлне 113 норма тунă. Унăн ĕçукçи 1110 тенкĕ шутланать. Колхозниксем хушшинче те лайăх ĕçлекенсем сахал мар. Нормăна тултарса ĕçлекенсем 400 — 500 тенкĕ ĕçукçи илеççĕ. Анчах районсенчи хăшпĕр колхозсен председательсем çавна шута илмеççĕ. Чылай çĕрте бригадăсем организацилесе ярас вырăнне, колхозниксене 5 — 10 кунлăха вăрмана ярасçĕ. Ку никамăн та усăллă мар.

Нумай пулмасть вăрманпунктĕнче производствăллă канашлу пулса иртрĕ. Канашлура вăрманпункт çумне çирĕплетнĕ районсенчи райсовет исполкомĕсенчен, ВКП(б) райкомĕсенчен представительсем тата колхоз председательсем пулчĕç. Анчах Улатăр райсовет исполкомĕ тата ВКП(б) райкомĕ темшĕн канашлăва çынсем те яман.

Канашлу 1940 çулти ĕç итогĕсене сӳтсе-явăрĕ, кăçал вăрман хатĕрлев планне ăнăçлăн тултарма мероприятисем палăртрĕ. Партконференци тĕлне пĕрремĕш квартал планне хатĕрлес тĕлĕшпе 75 процент, турттарас тĕлĕшпе 70 процент тултарма ыйăннă.

БИРЮКОВ.

Кирери вăрманпунктри пуçламĕш парторганизацин секретарĕ.

Колхозсем обязательствăсене пурнăçа кĕртмеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Механизациллĕ вăрманпунктчĕ плана тултарса пырас тĕлĕшпе халĕ те çав-çавах çителĕксĕр ĕçлет. Нихăш вăрманпунктĕпе трактор çулĕ те кулленхи плана тултарса пыраймаççĕ. Ана çак цифрăсем аван кăтартса параççĕ: январь уйăхĕнче Кабаново участокĕн 6 пин кубла метр вутă касса 13 пин кубла метр лини хĕрне турттармалла пулсан, вăл 10 кун хушшинче пĕтĕмпе те 512 кубла метр касса 1381 кубла метр кăна турттарнă. Кăмаша, Салапчăк. Мыслец вăрманпунктчĕсене те ырламаллах мар, вĕсем те малтанхинчен нимĕнле улшăнусем те тăвайман. Çĕмĕрле вăрманпунктчĕ çак уйăхра лини хĕрне 8 пин кубла метр турттарас вырăнне паянхи куна пĕтĕмпе те 168 кубла метр çеç турттарса кăларнă.

Вăрман хатĕрлевĕ ялăх пыни колхозсенчен те килет. Вĕсем кĕркунне-хирле хĕллехи сезонра ĕçлеме договорсем турĕç. Договорта куллен миçе çын ĕçлемеллине тата сезонра миçе кубла метр касса турттармаллине аван кăтартса панă. Анчах чылай колхозсем договор тăрăх илнĕ обязательствăна йĕркеллĕн пурнăçламаççĕ. Сăмахран, Магарино ялсоветĕнчи «Триер», «Будь готов», «Борец» колхозсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна виçĕ уйăх хушшинче те 10 — 20 процентран ытла гултарман. Тăван ялсоветĕнчи «Вперед», «Ударник» тата Кăмашари «Красный пахарь» колхозсем те хăйсен обязательствисене чăтма çук япăх пурнăçласа пыраççĕ.

Çӳлте асăннă колхозсен председательĕсем пĕр-икĕ уйăх каялла «вăхăт çук, ĕç нумай, ялхуçалăх ĕçне рĕçлемелле. Вăрманне ăна каярахпа та кайăпăр», тетчĕç.

Вăхăт виçĕ уйăх ытла иртрĕ. Договорта кăтартнă тăрăх вĕсен октябрĕн 1-мĕшĕнчех вăрмана тухмаллаччĕ. Пĕр уйăх иртрĕ, иккĕ, виççĕ... Çав-çавах вăрмана çителĕклĕ чухлĕ ĕç вăйĕ яман.

Январĕн 10-мĕшĕнче Çĕмĕрле районĕнчен вăрманта çуран 61 çын, лашапа 262 çын ĕçленĕ е вăл 50 процентран та кая пулать. Уйрăм колхозсем тăрăх çапла: Магарино ялсоветĕнчи «Полярная звезда», «Триер», «1-ое Мая», «Будь готов» колхозсенчен вăрман касна çĕрте пĕр çын та ĕçлемен, лашапа 13 çын ĕçленĕ, Кăмашари «Красный пахарь» колхозран пĕтĕмпе 3 çын, «Вперед» колхозран 7 çын, «Самолет» колхозран 3 çын ĕçленĕ.

Чылай колхозсем вăрманта ячĕшĕн çеç ĕçлеме пăхаççĕ. «Кăшт кайса ĕçлĕр те, кайран урăххисем кайĕç», теççĕ хăшпĕр колхоз правлени председательĕсем. Çакăн пек шухăшпа пурăнаççĕ, сăмахран, Мыслецри Сталин ячĕпе тăракан, Магаринори «1-ое Мая» колхозсен председательĕсем. Çак колхозсенчен пынă колхозниксем кăшт ĕçлесенех пăрахса каяççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхозран январĕн 9-мĕшĕнче вăрманта 38 çын ĕçленĕ, 10-мĕшĕнче вара 11 çын кăна юлнă, ыттисем киле кайнă.

Юлашки вăхăтра хăшпĕр вăрман участокĕсемпе пунктсенче партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине производствăра ӳсĕмсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешӳ пырать. Ку кĕрешӳре уйрăм колхозсем большевикла хастарлăх кăтартаççĕ. Сăмахран, Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Мозяков юлташ) хăйĕн обязательствине партконференци уçăлнă тĕле пĕтĕмпех пурнăçлассишĕн кĕрешет, Чăваш Улхашри «Искра», Турханти «Комбинат» колхозсем те вăрман хатĕрлевĕнче активлăн ĕçлеççĕ. Сăр трактор çулĕ çинче ĕçлекенсем XVIII партконференци уçăлнă тĕле 35 пин кубла метр вутă турттарма обязательство илчĕç.

Ытти колхозсен те малта пыракансенчен пример илсе хĕрӳллĕн ĕçе тытăнмалла. Кашни колхозăн, колхоз членĕн партконференцине ĕçре çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илмелле.

Хар. ЛИСИН.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче йĕркелĕх тума вăхăт

Чăваш республикинчи колхозсенче çĕнĕрен фермăсем организацилес ĕç начар мар пырать пулсан та, çав фермăсенче вара выльăхсене ăратлантарасси, вăл ĕçе тĕрĕс туса пырасси ялăх пырать. Уйрăм колхозсенчи фермăсенче выльăхсене ăратлантарса пырас ĕç çине уйрăмăнах начар çавăрăнса пăхаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче выльăхсем шучĕпе те, пахалăх тĕлĕшпе те хăвăрт ӳссе пырасси фермăсем валли выльăхсене пĕлсе туяннинчен тата зоотехникăллă ĕçсене аван йĕркелесе пынинчен нумай килет. Йăлтах урăхла, фермăсем валли выльăхсене, унтан та ытларах аçа выльăхсене пĕлмесĕр туяннă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, уйрăмăнах выльăхсене ăратлантарас ĕçе кирлĕ пек туса пыман çĕрте ялăх результатсем пулаççĕ. Çавăнпа та селекцине ăратлăх ĕçне ферма организациленĕ кунсенчех туса пыма тытăнас пулать.

Çак йĕрке Шупашкар райçĕрĕç пайĕшĕн паллă пулмалла. Анчах, Шупашкар районĕнчи колхозсенчи фермăсен ĕçĕсене анализ туса пăхнă хыççăн сакна курмалă çук. «Осоавиахим» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче (вĕсем Чăваш АССР Наркомземĕнчен те ытлашши аякра мар) выльăхсене ăратлантарас тата зоотехникăллă контроль туса пырас ĕçсем питĕ начар пулса пыраççĕ. «Осоавиахим» колхозра çĕнĕрен сĕт-çу ферми организациленĕ. Паянхи куи тĕлне фермăра икĕ вăкăр — метис-симментал ăраттисем, сăвакан ĕнесем 5 пус: иккĕшĕ — метис-симментал, 2 пуç — метис-красногорбатовский, тепĕр пуç ăратсăр йăх. Кусемсĕр пуçне тата метис-симментал ăраттисем 8 пуç пушмак пăрусем шутланаççĕ. Çапла кунта ферма валли выльăхсене, вĕсен пахалăхне кура мар, выльăхсен хисепĕ енĕпе пулмалли плана тултарас шутпа туяннă. Аçа выльăхсене туяннă чухне вĕсене зоотехника енчен ытларах çавăрăнса пăхмалла. Икĕ вăкăртан пĕри «Залет» ятлă вăкăр брак, вырăнти ăрат шутланать. Вăл виçĕ çулта пулсан та 428 килограмм анчах туртать. Унăн тĕрлĕрен çитменлĕхсем те сахал мар.

Ферма заведующийĕ каланă тăрăх, райçĕрĕç пайĕн старший зоотехникĕ Семенова юлташ «Залет» ятлă вăкăра ĕне, тесе шутланă. Чăн та вăл хăйĕн ӳт-пĕвĕ тăрăх начар ĕне манерлĕ Паллах, çакăн пек вăкăр выльăхсен ăратлăхне лайăхлатмă мар, начарлатма çеç пултарать.

«Герой» ятлă иккĕмĕш вăкăр «Залет» вăкăртан лайăхрах пулсан та, унпа выльăхсене ăратлантарас ĕçре усă курма май çук. Колхозри икĕ вăкăрĕ ге III-мĕш класра тăракан вăкăрсем шутланаççĕ. Вĕсем ĕнесен ăратлăхне лайăхлатма пултараймаççĕ. Мĕнтĕн тесен фермăри ĕнесем пĕрремĕш тата иккĕмĕш класс шутĕнче тăраççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхозри вăкăрсем, уйрăмах пушмак пăрусем ăратлăх енчен лайăхрах. Анчах фермăра, ытти колхозсем пекех, зоотехникăллă ĕçе туса пымаççĕ. Çавна май, 1940 çулта ĕнесене системăсăр чуптарнă, çырса пыман. Кашни ĕнене мĕнле вăкăрпа чуптарнине шута илмен. Вăкăрсем ирĕккĕнех çӳренĕ.

Эпир тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, «Осоавиахим» колхозра чупнă пăрусенчен иккĕшĕ хĕсĕр юлнă. Çапла ĕнтĕ фермăсенче зоотехникăллă ĕçсем çителĕксĕр пулса пынине çакă та аван кăтартса парать. Ку ĕçре райçĕрĕç пайĕн тата Наркомзем работникĕсем кăна мар, колхозсенчи работниксем те айăплă.

— Пирĕн плана тултармалла, тесе калама пултараççĕ колхозсем. Паллах, фермăсем валли выльăхсем туянмалли плана тултармалла. Анчах, плана тултарнă чухне ĕç пахалăхĕ çине ытларах çавăрăнса пăхмалла.

Малтанхи вăхăтра (2—3 çул хушши) пысăк мар колхозсенче начаррисене 2 вăкăр тытас вырăнне лайăххине пĕр вăкăр тытса усрани усăллăрах пулать. Икĕ колхозпа (кашни колхозра ăратлă вăкăр çитĕнтериччен) пĕр вăкăр тытса усрани те аван. Тĕслĕхшĕн, «Осоавиахим», Молотов ячĕпе тăракан колхозсене илер. Вĕсен иккĕшĕн майракаллă шултра выльăхсем пурĕ 36 пуç, çав вăхăтрах тăватă вăкăр шутланать. Çак колхозсенче малтанлăха, ик-виç çуллăха икĕ вăкăр тытса усрани те çителĕклĕ. Икĕ ăратлă вăкăр тытни ĕнесен ăратлăхне чылай лайăхлатма пултарать. Вăкăрсем вырăнне ĕнесен хисепне ӳстермелле. Çавăн пекех ĕнесене искусственнăй майпа пĕтĕлентермелли пунктсем организацилемелле.

Пирĕн фермăсенче чаплă кадрсем ĕçлеççĕ. Вĕсене ĕçре пулăшса пымалла, çавăн пек чухне кăнă ĕнесен ăратлăхне ӳстерме пулать. Ферма заведующийсем валли вунăкунлăх курссем организацилени те аван пулмалла. Курсра вĕсем зоотехника тĕлĕшпе чылай пĕлӳ илмелле.

Мĕнпур общественноçăн, чи малтан зоотехниксен колхозсенчи выльăхсен ăратлăхне лайăхлатассишĕн кĕрешмелле.

В. СОЛОВЬЕВ.

Ялхуçалăх наукисен кандидачĕ, Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн доценчĕ.

40 пин тенке яхăн тупăш

ОКТЯБРЬСКОЕ. 1940 çулти укçа-тенкĕ тупăшне шута илсе пĕтернĕ хыççăн «Путь Ленина» колхозăн мĕнпур укçа-тенкĕ тупăшĕ 40 пин тенке çитни палăрчĕ. Вăл шутран пахча-çимĕç сутса 15 пин тенкĕ, хăмла лартса туса 7 пин тенкĕ, государствăна пурçăн коконĕ сутса 3 пин çурă тенкĕлĕх тупăш илнĕ.

Ф. Петров.

Пысăк тухăçлă тырпулшăн ăмăртаççĕ

ВАРНАР. Уравăш ялсоветне 4 колхоз кĕрет. Вĕсенчен виççĕшĕ партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Договорсене çирĕплетнĕ.

Анаткас Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз «1-ое Мая» колхоза ăмăртăва чĕнчĕ, кун хыççăн колхозниксен ĕçри хаваслăхĕ ӳсрĕ, 2 — 3 кун хушшинче уя 2000 лав тислĕк кăларчĕç, 41 га çинче юр тытрĕç, 1350 лав юшкăн, 31 центнер кĕл, 11 центнер кайăккĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлерĕç.

Çавăн пекех вăрлăх сортласси те ăнса пычĕ. Пурĕ 451 центнер сортланă, вăрлăха пĕрремĕш кондицине çитернĕ. Ялхуçалăх машинисене пурне те юсаса, çу сĕрсе лартнă. Лаша кӳлмелли хатĕрсем — пăяв, урхалăх т. ыт. те çителĕклĕ.

Колхозра стахановла шкул организациленĕ. Унта 35 çын вĕренме çӳреççĕ.

— Кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 25 центнер тĕштырă илетпĕрех,—тет колхоз председателĕ Иванов юлташ.

«1-ое Мая» колхоз та ăмăртăва хутшăннăранпа çуракине вăйлăн хатĕрленме тытăнчĕ. Колхоз уя 1034 лав тислĕк, 558 лав торф кăларчĕ, 768 лав юшкăн хатĕрлерĕ. Кунсăр пуçне 130 центнер фекали, 14 центнер кĕл пухнă. Анчах та колхозра вăрлăх сортласси пĕтĕмпе ялхуçалăх машинисене юсасси юлса пырать-ха.

Çавалкасри «Колхозница» колхоз вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе иртнĕ çулта малта пынă. Колхоз кăçал та малта пырать. Иртнĕ çулта гектартан вăтам шутпа 25 центнер тĕштырă туса илнĕ.

Колхозри 2-мĕш бригадăри звено паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Çак звенона Анна Герасимова ертсе пырать. Кăçалхи çул çак звено гектартан 60 центнертан кая мар тĕштырă илессишĕн кĕрешет.

Çав вăхăтрах ялсовета кĕрекен Утарти «Трактор» колхоз питĕ начар ĕçлесе пырать. Колхоз вăрлăх сортласа пĕтермен, тислĕк кăларман, машинăсене юсаман. Колхоз председателĕ Алексеев юлташ никампа та ăмăртса ĕçлемест. Колхозра культурăллă-массăллă ĕç çук. Ку колхоз кашни çулах кая юлса пырать. Çавăнпа та ялсовечĕн ăна пулăшмалла, малта пыракансен ретне кăларма тăрăшмалла.

Ан. Крислов.

Сталинла стипендиатсем

Каçхине институт карташĕсем, коридорсем шăпах пушанаççĕ. Студентсен кулленхи хĕрӳллĕ вĕренĕвĕ аудиторисене, лабораторисене, кабинетсене, библиотекăсене куçать. Перерывсенче çу уйăхĕнчи утарти вĕлле пек вĕресе тăракан пысăк çурт вăхăтлăха çынсăр тăрса юлнă пек туйăнать. Вăхăтран вăхăта карташ çумĕпе йĕлтĕрçĕ-студентсен ушкăнĕсем сивĕ юра пĕр енĕрлĕн чăмăлтаттарса иртсе кайни, хуçалăхри работникăсем калаçни, автомашина сасси илтĕнеççĕ.

Эпир общежити вĕçĕнчи тирпейлĕ те таса пӳлĕме пырса кĕтĕмĕр. Пире хирĕç вăтам пӳллĕ, йăвашшăн та тимлĕн пăхакан куçлă çамрăк тăчĕ.

— Каховский, — терĕ вăл, — паллашăпăр, ларăр.

Сĕтел пуçĕнче çамрăк хĕрарăм ларать, тĕрлĕрен тетрадьсем, кĕнекесем хатĕрлет.

Икĕ çамрăкĕ те тин çеç йĕлтĕрçĕ сӳресе таврăннă мĕн, январьти сулхăн çилпе хĕрелсе çитнĕ питçăмартисем ăшăнса та çитеймен.

Ку пӳлĕмре икĕ талантлă çамрăк — Чăвашсен государство педагогика институтĕнче вĕренекен чи паллă отличник-студентсем — сталинла стипендиатсем пурăнаççĕ.

— Йăли çавăн пек ĕнтĕ пирĕн, — тет Каховский, ăшшăн кулса. — Кăнтăрла ултă сехет вĕреннĕ хыççăн сывăрса канатпăр, унтан обязательно уçă сывлăшра пĕр сехет çӳреме тивет, халĕ акă йĕлтĕрпе сӳретпĕр, — питĕ аван спорт.

Сăмах майĕпе вĕренӳ ыйтăвĕ çине куçрăмăр. Вĕренӳ вăл—пысăк ĕç, хăйĕн çине тимлĕн пăхма хушать. Ку ĕçĕн продукцийĕ — вăл пĕлӳ. Вĕренӳ ĕçĕ çине кирлĕ пек пăхмарăн пулсан, ĕçĕн продукцийĕ те начар пахалăхлă тулать. Ĕç ăнăçлă пытăр тесен, уллăнми система тăрăх йĕркелесе пыма кирлĕ. Вара ăна вĕренӳри кирек енпе йывăрлăхсем те парăнаççĕ, студент пур дисциплинăсем тăрăх та çăмăллăнах ĕлкĕрсе пырать, экзаменсенче унăн пĕлĕвне отлично хак параççĕ. Василий Каховский тата унăн арăмĕ —стипендиатка Ольга Николаева хăйсен кулленхи вĕренĕвĕнче çавăн пек йĕрке туса çирĕплетнĕ. Ирхине 9 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен пурĕ 6 сехет хушши — урокченче пуласçĕ. Каховский кашни лекци тăрăх уйрăм конспектсем çырса пырать, чи кирлĕ те характерлă вырăнсене палăртса хăварать, е ăнланман вырăнсем пулсан çийĕнчех консультаци илет.

Виçĕ сехетрен пилĕк сехете çитиччен — кану вăхăчĕ. Ку вăхăтран чылай пайĕ уçă сывлăшра иртет.

Каçхине 5 сехетре сталинла стипендиатсен тепĕр хут тимлĕ вĕренĕвĕ пуçланать. Чи малтанах вĕсем кăнтăрла çырса пынă конспектсене тĕплĕн пăхса тухаççĕ, кирлĕрех вырăнсене тепĕр хут палăртаççĕ. Василий Каховскипе Ольга Николаева программа тăрăх кăтартнă кĕнекесене вуланипе çеç чарăнса тăмаççĕ.

— Программа тăрăх органически химине эпир Степанов учебникĕ тăрăх вĕренетпĕр. Ку учебник тăрăх конспект çырса тухни чылай пулать ĕнтĕ. Халĕ эпир «Органически химин курсне» Каррер учебникĕ тăрăх неорганически химине Генрих Реми учебникĕ тăрăх хамăр тĕллĕнех вĕренме тытăнтăмăр,— тет Каховский.

Çавăн пекех ытти дисциплинăсем тăрăх та вĕсем, программăра кăтартса пани çинче çеç чарăнса тăмасăр, малалла хăйсем тĕллĕн вĕренме, лекцисенче илнĕ материала ытларах та ытларах пуянлата тăрăшаççĕ. Вĕсен сĕтелли çинче кирек хăш вăхăтра та «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» курма пулать, сĕтел çумĕнчи этажеркăра марксизм-ленинизм литератури чи пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Каçхине 9 сехетре Каховскипе Николаева общественăллă ĕçсене тума каяççĕ. 10 сехет çурăра вĕсем çĕнĕ научпай журналсене вулама лараççĕ. Вĕсен чи юратнă журналсенчен пĕри — «Техника молодежи». Унпа юнашарах ытти техникăллă журналсем выртаççĕ.

Çакăн пек иртет сталинла стипендиатăн вĕренӳ кунĕ. Паян мĕн вĕреннине ăна лăплантармасть, çĕнĕрен çĕнĕ пухăшсем, ĕмĕтсем çуратать.

Природăн пĕр çирĕп йăлăн пур: вăл хăйĕн вăрттăнлăхĕсене питĕ те хытă пытăрать тăрать. Вĕсене шыраса тупас, тĕпчесе пĕлес тесессĕн пĕр условин — вĕренни, вĕренни тата вĕренни кирлĕ. Наукăсене тарăннăн вĕреннĕ, çĕнинне шыраса, тĕпчесе тупма тăрăшакан çын çеç природăпа унăн вăрттăнлăхĕсене уçас пирки шанчăклăн та хăюллăн калаçма пултарать. Каховский пединститутра вĕреннине пĕрлех Мускаври философине литература институчĕн 5-мĕш курсĕнче заочнăй йĕркепе вĕренет. Зачет кĕнеки вăл иккĕмĕш институтра та отличник пулни çинчен çирĕплетсе парать. Икĕ институтра вĕренӳре отлично ĕлкĕрсе пыма çынна çăмăллăхах ĕлкĕрсе пырать, экзаменсенче унăн пĕлĕвне отлично хак параççĕ. Василий Каховский тата унăн арăмĕ —стипендиатка Ольга Николаева хăйсен кулленхи вĕренĕвĕнче çавăн пек йĕрке туса çирĕплетнĕ. Ирхине 9 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен пурĕ 6 сехет хушши — урокченче пуласçĕ. Каховский кашни лекци тăрăх уйрăм конспектсем çырса пырать, чи кирлĕ те характерлă вырă

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Германи командованийĕ çапла пĕлтерет: январĕн 14-мĕшĕнче çанталăк начар пулнипе Германи авиацийĕ Кăнтăр Англире разведкăсем кăна туна. Çакна палăртнă: Германи авиацийĕ юлашки каçсенче Плимутпа Портсмутри çар объекчĕсене пысăк сиен кӳнĕ.

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 14-мĕшĕнче Лондона самолетсенчен сыхланма тревога паман. Каçхине противник самолечĕсем Англири ытти районсем çине пырса тапăнни çинчен сведенисем илмен.

Ыран январĕн 15-мĕш тенĕ чух çĕрле Англире пур çĕрте те лăпкă тăнă. Англи самолечĕсем Германи çине вĕçсе кайман.

Греципе Итали хушшинчи вăрçă

АФИНЫ, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Греци командованийĕ ĕнер каçхине пичетлесе кăларнă сводкăра каланă тăрăх, фронтсенче активлăх пысăках пулман.

Греции государство хăрушсăрлăхĕн министерстви ĕнер каçхине пичетлесе кăларнă коммюникере çапла каланă: Итали авиацийĕ Превеза çине бомбăсем пырса пăрахнă. Хăшпĕр çуртсене сиен кӳнĕ. Вилнисемпе аманнисем çук. Çавăн пекех Козанипе Сиатиста таврашĕнчи пушă районсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем те, сиенсем те çук.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Грецине Англи самолечĕсем Валона хули çине вăйлăн бомбăсем пырса пăрахнă, порта тата хулан çурçĕр пайне сиен кӳнĕ. Çавăн пекех Валона сывăхĕнче итальянецсен çар лагерĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă. Икĕ офицер тата 23 салтак вилнĕ.

Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Греци влаçĕсен представителĕсем çапла каланă: Клисурăран çурçĕр енчи районра итальянецсем вăйлăн хирĕç тăраççĕ пулсан та, грексем Берат еннелле малалла кайса пыраççĕ.

Итали сводки

РИМ, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Греци фронтĕнче пысăк мар ĕçсем пулса пыраççĕ.

Киренаикăра, Тобрукпа Джарабуб районĕнче, разведка отрячĕсемпе артиллери активлăхĕ палăрать. Итали самолечĕсем противникăн бронетанковăй чаçĕсемпе артиллерийĕ çине ăнăçлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Противник авиацийĕ Ливири хăшпĕр пунктсем çине темиçе хут пырса тапăннă. Темиçе çурта çĕмĕрсе тăкнă.

Хĕвелтухăç Африкăра, Англо-Египет Суданĕн чиккинче, противникăн механизированнăй чаçĕсем атакине сирсе янă. Итали авиацийĕ противник грузовикĕсемпе войскисем çине бомбăсем пырса пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Противник самолечĕсем Гораж-Тертала, Мояле тата Мега çине бомбăсем пырса пăрахнă. Бомбăсем кăштах сиен кӳнĕ.

Америка Англи валли самолетсем сутни

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, 1940 çулта США Англипе Канадăна 1900 самолет—1939 çуллинчен 6 хут нумайрах—янă. 1940 çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче Англипе Канадăна пурĕ те 275 самолет кăна янă, иккĕмĕш çурçулĕнче 1600 самолет ытла янă.

США-ра нациллĕ гвардин татах тепĕр пайне çара илеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Рузвельт нациллĕ гвардин юлашки пайне (ултă дивизи — 108 пин çынна яхăн) действительнăй çар службине илесси çинчен приказ кăларнă. Призыв хăçан пуçланассине кăтартман.

Парижра бандитизм ӳссе пырать

ПАРИЖ, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Парижра бандитла ĕçсен хисепĕ ӳссе пырать. Хăçатсенче пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ эрнере 15 тĕлте магазинсем, киносемпе театрсен кассисем тата уйăм çынсен хваттерĕсем çине хĕçпăшăлланнă çынсем пырса тапăннă. «Пти Паризьен» çапла çырать: юлашки виçĕ уйăх хушшинче пит те нумай тĕлте хваттерсене çаратнă, хĕçпăшăлсемпе тата çĕрлехи вăхăтра пырса тапăннисем нумай пулнă, çакна кура хулари халăх штех те канăççăрланать. Хăçат бандитизма хирĕç кĕрешме ыйтать.

Франци Индо-Китайĕпе Таи хушшинчи вăрçă

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 14-мĕш. (ТАСС). Ассошиэтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Таи войскисем Комбоджа провинцинче малаллах наступлени туса пыраççĕ. Индо-Китай чаçĕсем, противника хирĕç тăмасăрах, каялла чакаççĕ. Ытти секторсенче те наступлени туни палăрать.

Меконг юханшыв тăрăхĕнчи фронтăн пĕтĕм линийĕпех пĕр-пĕрне хирĕç артиллерирен персе тăраççĕ.

Таин виçĕ бомбардировщикĕ Паксе çине пырса тапăннă. Кунсăр пуçне, Таи войскисем Вьен-Тьян хули çине пенĕ.

БОРДО, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Ханойра пичетлесе кăларнă коммюникере çапла каланă: Франци истребителĕсем Таин икĕ бомбардировщикне персе антарнă. Кунсăр пуçне, Франци авиацийĕ Таи территорийĕ çинчи темиçе объект çине бомбăсем пырса пăрахнă.

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Индо-Китайпа Таи чиккинче вăрçă ĕçĕсем сарăлса кайнă май, чикĕри полосара вăхăтлăха грузсем туртăрма чарнă.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 15-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Францирен Сайгона генерал Мордан пырса ситнĕ, ăна генерал Мартен вырăнне Индо-Китайри войскăсен командующине лартнă.

Франци Индо-Китайĕн влаçĕсем çапла пĕлтереççĕ: Сисофон районĕнче Индо-Китай войскисем чикĕ патĕнчен 35 миля каялла чакнă, тесе пĕлтерни—тĕрĕс мар хыпар.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центральнăй Китайра. Сянтан хулине (Наньчанран кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле 35 километртра) тата ытти пĕчĕк пунктсене туртса илнĕ хыççăн, Китай войскисем малаллах кайса пыраççĕ. Пынцзэ патне сывхарнăсемĕн, вĕсем ялсене Япони войскисен юлашкисенчен тасатса пыраççĕ.

Хунань провинцийĕн çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче Китай войскисем Пуци станцийĕ сывăхĕнчи 2 чугунçул кĕперне çĕмĕрсе тăкнă (Кантон—Ханькоу чугунçулĕ çинче, Иочжоуран çурçĕр енче). Çакна пула чугунçул тăрăх поездсем çӳреме чарăннă. Пуци станцийĕнчен хĕвелтухăç енче, Янлоутунпа Тунчэн районĕнче, Китай войскисем наступлени туса пыраççĕ.

Январĕн 14-мĕшĕнче Япони самолечĕсен икĕ группи Сычуань провинцийĕн чылай пункчĕсем çине пырса тапăннă. Самолетсем мĕнле сиен кӳни паллă мар.

Çурçĕр Китайпа Кăнтăр Китайри лару-тăру çинчен сведенисем çук.

Январĕн 15-мĕш. (ТАСС).

ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Юлашки кунсенче Германирен Брюсселе 10 пин çын ытла тавăрăннă, вĕсем — Бельгин вăрçăра тыткăна лекнĕ çыннисем.

* * *

Мадридра (Испания) кашни çын пуçне кунне 120-шер грамм çăкăр памалла тунă.

* * *

Худиксвалл хулинчи (Хĕвелтухăç Швецире) механический мастерской хуçи Отто Вестман йĕлтĕрсем туса хатĕрлемелли машина тунă. Веетман машини пĕр сехетре 100 мăшăр йĕлтĕр туса кăларма пултарать.

* * *

Юлашки кунсенче Парижри полици миллион франклăх ылттăн укçа конфискацинелĕ. Çав укçасене уйăм çынсем вăрттăн сутнă пулнă. 20 франклăх ылттăн укçана 550—600 франка сутнă. Çакна май нумай çынсене арестленĕ.

* * *

Январĕн 20-мĕшĕнче Мексикăна Америкăри финанспа промышленность фирмисен 60 представителĕ пыраççĕ. Вĕсем Мексикăра Америка капиталĕсене вырнаçтарасси çинчен калаçусем ирттереççĕ.

Г. Я. Седов музейĕ

МАРИУПОЛЬ. Кăçалхи çул пулăçсен Кривая Коса поселокĕнче (Сталинград облаçĕ) — Георгий Яковлевич Седов çуралнă çĕрте—хăюллă мореплаватель çуралса ӳснĕ хăмăш пӳрте ĕлĕк мĕнле пулнă çавăн пек туса йĕркелеççĕ. Седов вĕреннĕ шкул çурчĕ çумне мемориаллă хăма çакса хураççĕ. Седов арăмĕ çĕнĕ музея упăшкин чылай япалисене парать. Поселокра Седов памятникне лартаççĕ.

Алданра ылттăн катăкĕ тупнă

Верхне-Сталински приискăн старательски бригади Алданра 1.244 грамм туртăнăн ылттăн катăкĕ тупнă.

Спортăн хĕллехи сезонĕ. **Ӳкерчĕк çинче:** «Спартак» обществин физкультурницисем. Сулахайран сылтăмалла: А. А. Лобастова, В. В. Блинова тата М. М. Самойлова. А. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленетпĕр

Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленсе пынă май пирĕн Красноармейски районра 100 команда ытла организацинелĕ, пĕтĕмпе 600 çынна явăçтарнă. Ку тĕлĕппе уйрăмăнах Енĕшкассинчи «Восход» обществин коллективĕ аван ĕçлесе пырать. Çавăн пекех Çупар ялсоветĕнчи «Свобода», Сенъялти промартель çумĕнчи «Восход» коллективĕсем кроса лайăх хатĕрленсе тыраççĕ.

Кроса хатĕрленнипе пĕрлех колхозри кашни физкультура коллективĕ 1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулассишĕн кĕреşет.

Кроса хатĕрленес ĕçре ситменлĕхсем те пур-ха. Пĕтĕмĕшпе илсен ку ĕç районра çителĕксĕр пырать. Районĕпе 900 комсомолец ытла шутланать пулсан та, паянхи куна комсомолецсенчен 190 çынна çеç командăсене явăçтарнă. Çак ситменлĕхсене халех пĕтерсе, кашни комсомолеца тата кашни çамрăка ăмăртăва явăçтармалла. Комсомол райкомĕн ку тĕлĕппе ытларах ĕçлемелле.

П. ЯКОВЛЕВ.

Кухня ĕçĕсене механизацилени

Столовăйсемпе ресторансен Шупашкарти тресчĕ кухня ĕçĕсене механизацилеме тытăннă. Столовăйсенче çĕрулмине алăпа шуратас вырăнне ятарласа хатĕрленĕ машинăпа шуратма тытăннă. Пединститут столовăйĕнче çĕрулмине алăпа шуратнă чухне 12 çын ĕçленĕ пулнă. Çĕрулмине машинăпа шуратма тытăннă хыççăн халĕ 2 çын кăна ĕçлеççĕ.

Машинăпа ĕçлени çĕрулмирен тухакан отход хисепне те 20 процент таран чакарать. Кунсăр пуçне шуратнă хыççăн юлакан çĕрулми хӳпписем те ăя каймаççĕ. Вĕсем çак машинăсемех отходран крахмал таваççĕ.

Ресторанта аш-какайсене машинăпа турама тытăннă. Машинăпа ĕçленипе рабочисен шутне те 5 çын таран чакарнă.

Çавăн пекех, апат çиме пыракансене пăхасси те аванланнă. Столовăйсенче стандартлă сĕтелсем пачах та пулман. Халь столовăйсенче 312 стандартлă сĕтелсем лартнă, çак сĕтелсем çинче пĕр вăхăтра 1228 çын апатланма пултараççĕ.

Кухня ĕçĕсене механизацилени, ĕç вăхăчĕпе туллин усă курни столовăйсен тупăшне ӳстерме пулăшнă. 1940 çулта столовăйсемпе ресторансен тресчĕ 294 пин тенкĕ перекетленĕ.

Лайăх ĕçлекен техникăллă станци

Çĕмĕрле районĕнчи çамрăк натуралистсемпе техниксен станцине 1939 çулта организацинелĕ. Çак кĕске вăхăтрах станци хăйĕн ĕçĕнче пысăк çитĕнӳсем турĕ, республикăра малта пыракан техникăллă станцисенчен пĕрийĕ пулса тăчĕ.

Станцин опытлă çĕр участокĕ тата ялхуçалăх лабораторийĕ пур. Çуракине хĕрсех хатĕрленме тытăннă. Вăрлăхсене, пахча-çимĕçсене шăтарса пăхма хатĕрленеççĕ. Ачасем хăйсемех çак кунсенче метеорологи станцине йĕркелесе ситереççĕ.

Станци ялти шкулсемпе сыхăнса ĕçлессине те вăйлатса пырать. Районри шкулсенче тĕрлĕрен кружоксем 37 организацинелĕ, унта 630 ачана явăçтарнă. Натуралистсемпе 9 хутчен походсемпе экскурсисем, семинарсем тата 38 консультаци туса ирттернĕ. Хăйĕн паха ĕçĕсене станци 1940 çулти ноябрь уйăхĕнче пулса иртнĕ çамрăк натуралистсемпе техниксен республикăри выставкинче лайăх кăтартса патĕ.

Çĕмĕрле райсовечĕн исполкомĕ техникăллă станцине 1941 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнма ирĕк пама ыйтса ЧАССР Совнаркомĕ умне ыйту лартнă.

Профбилетсене улăштарма тытăннă

ВЦСПС йышăннă тăрăх, çĕнĕ строительствăра профсоюз членĕсен билечĕсене улăштарасси пуçланчĕ. Постройком билетсене улăштарма план тунă, ăнлантаруллă ĕçсене туса пыма комитет членĕсене участоксем çумне çирĕплетсе тухнă. Профсоюз членĕсен билечĕсене улăштарас умĕн кашни участокра тата отделта билетсене улăштарас йĕркесем çинчен калаçусем ирттереççĕ. План тăрăх çавăн пек калаçусем столярнăй мастерскойра, строительствăн управленинче пулса иртрĕç.

Профсоюз членĕсен билечĕсене улăштарас ĕçре комсомолец В. Емельянов, комитетсен председателĕсем Фролов тата И. Зайцев юлташсем активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ, вĕсем участоксенче тĕрлĕрен калаçусем ирттереççĕ.

Профбилетсене чи малтан строительствăн управленинче улăштарма тытăннă. Билетсене улăштарнă май, профсоюз членĕсем член укçисене тӳлеççĕ, члена кĕме çĕнĕрен çынсене явăçтараççĕ, профсоюз ĕçе лайăхлатса пырать.

Б. ШАВЕЛЕВ.

КĔСКЕН

Çĕнĕ лаборатори. Шупашкарти «Водосвет» башнинче шыв сăнамалли лаборатори организацилеççĕ. Шыв тасатма тата çĕнĕрен икĕ лотатор тăваççĕ.

120 дворник ĕçлемелле. Шупашкар хула Совечĕн пурăнмалли çуртйĕрсен управленийĕ хăйĕн çурчĕсенче ĕçлеме 120 дворник илме палăртнă. Çавăн пекех ытти учрежденисен те хулари пысăк урамсенчи çуртйĕрсен тавраштĕнче ĕçлеме дворниксем пулмалла.

Шкулсенчи буфетсем. Шупашкарти столовăйсемпе ресторансен тресчĕ шкулта вĕренекен ачасем валли буфетсем уçнă. Вăл буфетсенче кулленех 5000 ача ытла апатланать. Кунсăр пуçне трест Пионерсен çуртĕнче ачасем валли столовăй уçать. Çуллахи вăхăтра ачасен культурăпа кану паркĕнче те столовăй уçаççĕ.

Пысăк пахалăхлă вăрлăхсем. Кăçалхи çул Госсортфондра колхозсем валли улăштарса памалли пысăк пахалăхлă вăрлăхсем пур. Шупашкарти базăра сăнаса пăхнă тăрăх, урпа вăрлăхĕ 98 процент, çурхи тулă 96 процент, «Диппе» сортлă сĕлĕ 96 процент, пăрса вăрлăхĕ 95 процент шăтнă.

40 пин тенкĕ преми панă. Заготлен конторин клевер вăрлăхĕ тăратнăшăн Элĕк районĕнчи колхозсене 40 пин тенкĕ преми-надбавка панă.

В. И. Ленинăн Хусанти çурт-музейĕнче

Хусанта, Ленин урамĕнче (ялĕкхи Первая Гора урамĕ) ытти çуртсенчен шалăрах, йывăççем хушшинче, çырма хĕрринче 58-мĕш номерлĕ çурт ларать. Çак çуртра Владимир Ильич Хусанти университета вĕренме кĕрес умĕн пурăннă.

Халĕ ку çурт — В. И. Ленинăн çурт-музейĕ, ăна Тутар республикин правительстви йышăннă тăрăх 1937 çулта уçнă.

Хусана Владимир Ильич 1887 çулта, Чĕмпĕрти гимназирен вĕренсе тухнă хыççăн килнĕ. Вăл çул патша палачĕсем унăн юратнă пиччĕшне—Александр Ильича çакса вĕлернĕ. Пиччĕшне вĕлернĕ хыççăн вăл патша правительствине татах та ытларах курайми пулнă. Чĕмпĕрте пурăннă чухнех çамрăк Ленин социаллă пĕртанмарлăхăн сăлтавĕсем çинчен, пуянлăхпа чухăнлăх мĕнрен пуçланса кайни çинчен, помещиксемпе капиталистсем рабочисемпе хресченсене пусмăрлăхра усрасси мĕнрен пуçланса кайни çинчен тарăнăн шухăшланă.

Революциллĕ ĕçе хутшăнма хатĕрленсе Владимир Ильич, чи малтан, отлично вĕренме тăрăшнă. Хусанти музейра Владимир Ильичăн Чĕмпĕрти гимназирен вĕренсе тухсан панă документченĕсене (аттестат зрелости, похвальнăй лист, характеристика) курма пулать. Çак документсенчен кашниех Ленин пултарулăхĕ калама çук пысăк пулнине, çавăнпа ĕçлеме юратнине уççăн кăтартса парать.

«Весьма талантливый, постоянно усердный и аккуратный, Ульянов во всех классах был первым учеником и, при окончании курса, награжден золотой медалью, как самый достойнейший по успехам, развитию и поведению». Çакăн пек характеристика панă Ленина Чĕмпĕр гимназийĕн директорĕ. Хусанти университета вĕренме кĕме.

Ленинăн Хусанти çурт-музейĕнчи документсем 17 çулхи Владимир Ильич Хусанти университетăн юридически факультетне вĕренме кĕни çинчен, вăл Хусанти студентсен 1887 çулти декабрĕн 4(16)-мĕшĕнчи революциллĕ выступленине хутшăнни çинчен, ăна Кокушкино ялне ссылкăна мĕнле яни çинчен каласа параççĕ.

Хусанти университетри студентсен сходкинчи выступленишĕн Владимир Ильича, университетран кăларсан, декабрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле арестленĕ. Кокушкинăри ссылкăра ăна вăрттăн асăрхаса тăмалла тунă. Асăрхаса тăрасси мĕнле майсемпе пулса пынине музейра пухса хунă жандармери документченĕсем уççăн кăтартса параççĕ.

Кокушкинăра Владимир Ильич хăйĕн пĕлĕвне ӳстерессипе нумай ĕçленĕ, хресченсен пурнăçĕпе тата йăлисемпе паллашнă. Вара, кайран, 1888 çулти кĕркунне ăна каллех Хусана пыма ирĕк парсан, вăл çĕнĕ вăйпа революциллĕ ĕçе тытăннă, Маркс произведенийĕсене вĕреннĕ.

Çурт-музейра Ленин йышăнса тăнă пĕчĕк пӳлĕме кĕрсен, сĕтел çинче Карл Марксăн «Капитал» ятлă произведенийĕ выртнине куратăн. Çамрăк Ленин пролетариатăн генийлĕ малтанхи философĕ, экономисчĕ, политикĕ Карл Маркс çырнă произведенисене вĕренсе пырса, научнăй коммунизма хăйĕн ăстанне çавтери революциллĕ хастарлăхпа тарăннăн хывнă.

Владимир Ильич 1889 çулта Хусантан Самара кайнă. Вăл Хусан университетне урăх тавăрăнайман, тата урăх никĕнле университетра та вĕренсĕймен. Жандармсем, полици, Хусан учебнăй округĕн попечителĕсем Владимир Ильич вĕренме кĕрессине пур майпа та кансĕрлесе пынă. Кун пирки музейри документсенчен пĕрин çинче çапла çырнине вулатпăр: «Уж опять ни брат ли того Ульянова. Ведь тоже из Симбирской гимназии? Да это видно из конца бумаги. Отнюдь не следует принимать». (Ку вăл Хусан учебнăй округĕн попечителĕ çутĕç департаментне пĕлтернĕ хут çине (1888 ç. июнĕн 19-мĕш) министр çырса хунă резолюци).

Юлашки вăхăтра музейра чылай çĕнĕ экспонатсем хутшăннă: Анна Ильинична сăн-ӳкерчĕкĕ, Владимир Ильичăн чернильници т. ыт. те. В. И. Ленинăн Самарта пурăннă вăхăтне кăтартакан отдел тунă. Кунта Алакаевка ялĕн фото-ӳкерчĕкĕ, Ленин Самарта пурăннă çуртăн ӳкерчĕкĕ, Ленин экстернлă экзамен пама ыйтса çырнă прошени тата экзаменсене ăнăçлă панă хыççăн илнĕ диплом пур.

1887 çулти декабрь уйăхĕнче В. И. Ленина Хусанта арестлесе, тĕрмене лартнă. Анчах та ăна мĕнле тĕрмене лартни халичченех тĕплĕн паллă пулман (В. И. Ленина арестлесен, Хусан Кремлĕн башнине хупса лартнă тесе шутланă). Ленин çав вăхăтра Хусанти пересыльный тĕрмере ларнине нумаях пулмасть тĕплĕн палăртнă. Ун çинчен Хусанти музея Ленинпа пĕрле тĕрмере ларнă Н. Н. Алексеев пĕлтернĕ.

Ленин кунĕсем тĕлне Хусанти çурт-музей вестибюлĕнче И. В. Сталин тупа тунин текстне лартаççĕ, ăна атлас çине çырнă.

Ленин кунĕсем çывхарнă май Хусанти çурт-музея экскурсине пыракансен йышĕ ӳссех пырать. Красноармеецсем, рабочисем, учительсем, пионерсем, школьниксем музей пӳлĕмĕсенчи экспонатсене чаплă шăплăхпа хумхануллăн пăхса иртеççĕ.

Музей уçăлнăранпа кунта (3 çул хушшинче) 82 пин çын ытла пулнă. Кунта Тутар республикинчи ĕççыннисем анчах мар, ытти облаçсемпе республикăсенчи (Красноярск, Ленинград, Куйбышев, Баку, Алма-Ата, Сталино, Чăваш АССР т. ыт. вырăнсенчи) ĕççыннисем те нумай килсе курнă.

А. ФЕДОРОВ.

СУД

Шкул ачисене хĕненĕшĕн

ШАХАСАН. Çĕнĕ Чулкассинчи туллимар вăтам шкулта учитель пулса ĕçленĕ П. Ананьев вĕренекен ачасене вăрçса тата хĕнесе пурăннă. 4-мĕш класра вĕренекен 10 çулхи Анастасия Мироновăна задачăсене тĕрĕс шутламан тесе, парттă çине тĕртсе янă. 11 çулхи В. Егорова урокран тула кăларса ярса 15 минут хушши шăнтса тăратнă пулнă.

Ананьев яланах ĕçсе çӳренĕ. Занятисене те ӳсĕр пынă. Вăл ачасене ытла та начар вĕрентнĕ. Класри 26 ачаран тăваттăшĕ вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайман. Арифметикăпа тĕрĕслӳ пулнă чухне 2 ача кăна задачăсене тĕрĕс шутланă.

Ачасене хĕненĕшĕн, вĕренӳ ĕçне япăхтарнăшăн халăх сучĕ Ананьева икĕ çуллăха тĕрмене хупмалла тунă.

П. МИКУШКИН.

Ялхуçалăхĕнчи стахановецсен канашлăвĕ

КАНАШ. Январĕн 14-мĕшĕнче Канашра ялхуçалăхĕнчи стахановецсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу 1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен итогĕсем тата кăçалхи çулăн задачисем çинчен сӳтсе-явăрĕ. Канашлура 200 çын пулчĕç. Канаш районĕ Шăхасан районне социализмлă ăмăртăва чĕннĕ май унтан делегаци килнĕ.

Канашлу 1941 çулта тырпул тухăçне тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерме конкретлă обязательствăсем илчĕ. Кăçал гектартан тĕттырă 14 центнертан кая мар туса илмелле, кашни ама сыснаран 13 çурă, кашни 100 çурăхран 115 путек, кашни сăваран ĕнерен 1200 литр сĕт, кашни 100 кĕсререн 80 тиха илмелле, — çакна палăртрĕ, çакăншăн кĕрешме чĕнчĕ колхозниксене канашлу.

Ф. АНТОНОВ.

Хĕрлĕ Çар кунĕ умĕн

СĔНТĔР. Районра Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ ăмăртăва тимлĕн хатĕрленсе пыраççĕ. Нумаях пулмасть 15 комсомолец Мари АССР Республикинчи Еласово районне 35 километра йĕлтĕрлĕ похода кайса килчĕç. Унта вĕсем комсомолецсем йĕлтĕрçĕсен ăмăртуне мĕнле хатĕрленсе пынине тĕрĕслерĕç.

«Париж Коммуни» колхозри комсомолецсем çуран 5 километрлă поход ирттерчĕç.

С. Н.

Лекци

Паян, январĕн 17-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче **«17 çул Ленинсăр—Ленин çулĕпе»** темăпа лекци пулать. Лекцине агитколлективсен руководителĕсемпе агитаторсене чĕнеççĕ. Лектор — **Д. Ф. Андреев** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать.

ПАРТКАБИНЕТ.

ФЕЛЬЕТОН ВЫРĂННЕ

Аçта вăл Суйăн ялĕ?

Тӳрех калăпăр: Суйăн ялĕ вăл (вырăсла каласан Сойгино) Улатăр районĕнче, Чăваш республикипе Куйбышев облаçĕ хушшинчи чикĕрен 6—7 километрта ларать. Çак ялта клуб пур. Клубра культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемен. Чăн та, унта кашни каçах халăх пухăнать, анчах... ытларах табак туртнине тата тĕрлĕ юмахсем каланине куратăн.

Клубри çакăн пек çитменлĕхсем çинчен ялта нумай калаçнă. Чылай калаçнă ун çинчен, нумай тарăхнă ун пирки ялти колхозниксем. Юлашкинчен, Суйăн ялĕнче пурăнакан икĕ çамрăк пĕр-пĕринпе тĕлпулнă та, çитменлĕхсем çинчен районри «Ленинский путь» хаçат редакцине çырса пĕлтермешут тытнă. Шут тытнă кăна мар, вĕсем ун çинчен райхаçат редакцине çырса та пĕлтернĕ.

Вĕсем çырнă çыру пĕр-икĕ кунтан райхаçат редакцине ситсе те выртнă. Çырăва илсен редакци сотрудникĕсем хушшинче çакăн пек тавлашу пуçланса кайнă:

Редакци секретарĕ: Итле-ха редактор юлташ, темĕнле пĕр çыру килчĕ.

Редактор: Мĕнле çыру, аçтан çыраççĕ, кам çырать?

Редакци секретарĕ: Аçтан, кам тата мĕн çинчен çырнине пĕлме çук. Мĕнлĕн тесен, ... ăнланма йывăр.

Редактор: Э-э, ку пирĕн районран килнĕ çыру мар, кажется. Пирĕн районра ун пек ял çук пулас.

Редакцин тепĕр сотрудникĕ: Чим-ха, редактор юлташ, кунта вĕт шăпах пирĕн районри Суйăн ялĕнчи клуб çинчен çыраççĕ?

Редактор: Пурпĕрех, раз, ял ятне Суйăн тесе çырнă пулсан, вăл пирĕн районри клубсем çинчен çырнă материал пулма пултараймасть. Мĕншĕн тесен, паçăрах каларăм, пирĕн районра Суйăн ялĕ çук, Сойгино кăна пур.

Редакци секретарĕ: Мĕн тăвас-ха вара манăн ку заметкăпа?

Редактор: Хуть те кирек мĕн ту, анчах хаçата пичетлеме пултараймастăп.

Редакци секретарĕ: Мĕншĕн?

Редактор: Паçăрах каларăм ĕнтĕ мĕншĕнне!

Редакци секретарĕ: Все же, мĕн тăвас-ха вара манăн ку материалпа?

Редактор: Ярса парăр пĕр-пĕр райхаçат редакцине.

Редакци секретарĕ: Сăмахран?

Редактор: Мĕн, «сăмахран» унта, давай çыр: «Город Канаш, ответ. редактору.

Редакция «Ленинского пути» направляет Вам корреспонденцию для помещения в Вашей районной газете. О результатах сообщите к 10-му января 41 г.

Ответственный редактор Кузнецов.

При ответе ссылка (?—М-н.) на наш № 1143 **обязательна».**

Канаш райхаçат редакцийĕ сире результат çинчен вăхăтра пĕлтерейменшĕн ан пăшăрханăрах, Кузнецов юлташ.

М—н.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторан—0—67, редактор заместителен—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88. çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Капкăн» тата «Ĕçхĕрарăмĕ» журналсен—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2239.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л.